ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Июнь
9
ЫТЛАРИКУН
№ 111 (9020)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ (1—2 стр.).
Республика уй-хирĕсенче (1 стр.).
СССР Министрĕсен Совечĕнче (3 стр.).
К. Михайлов.—Вырăс халăхĕн мухтавне кăтартакан япаласем. Государство истори музейĕн залĕсенче (3 стр.).
Н. Шашурин. — Хатĕрлев ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелле (3 стр.).
М. Исаев.—Вут-кăвартан сыхланар (3 стр.).
М. Алексеев. — Халăх сучĕсен ĕçне лайăхлатасшăн (3 стр.).
Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ (4 стр.).
Копенгагенри ĕççыннисен митингĕ (4 стр.).
Индонезири правительство кризисĕ пирки (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем (4 стр.).
Н. Минин.—Çанмалли кун Шупашкарта (4 стр.).

Ертсе пыракан кадрсене тĕрĕс суйласа илмелле тата воспитани памалла

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ парти, совет, хуçалăх кадрĕсене тата ытти работниксене йышлăн вĕрентсе ўстерсе ĕçре пиçĕхтерчĕ. Çак кадрсем хăйсене шанса панă ĕçе ăнăçлă туса пыраççĕ, партн политикине—совет стройĕн никĕсĕ пулса тăракан политикăна—практикăра пурнăçа кĕртеççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене ăнăçлă пурнăçлама кадрсен йышне малалла лайăхлатса пыни кирлĕ. Партипе государствăн ертсе пырас ĕçĕнче тĕп вăй кадрсем пулса тăраççĕ. Çавăнпа та кадрсене çитменлĕхсемпе килĕшми пулма, йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма воспитани парас тĕлĕшпе куллен, çине тăрса ĕçлемелле.

«Халĕ ĕнтĕ, хуçалăхăн пур отраслĕсенĕ те малта пыракан техникăпа хĕçпăшаллантарнă, совет халăхĕн культура шайĕ калама çук вăйлă ўснĕ хыççăн,— тесе кăтартса парчĕ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче,— ертсе пыракан кадрсенчен урăхларах, тата та нумайрах ыйтаççĕ. Промышленноçа, ялхуçалăхне, партипе государство аппаратне ертсе пырас ĕçре культурăллă, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен, ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме пултаракан, мĕнпур малта пыраканнине, прогрессивлине пулăшма, ăна малалла аталантарма пултаракан çынсем тăма тивĕçлĕ. Çакна тума пирĕн пур майсем те пур, мĕншĕн тесен ертсе пыракан кадрсене çав требованисем тăрăх суйласа илме тата ĕçе уйăрса лартма кирлĕ çынсен йышĕ халĕ ĕлĕкхинчен нумайрах ĕнтĕ».

Анчах та, çак кунсенче пулса иртнĕ КПСС обкомĕн V-мĕш пленумĕ палăртнă тăрăх, обком бюровĕ, партин хула тата район комитечĕсем кадрсене суйласа илессине, ĕçе лартассине тата воспитани парассине КПСС XIX-мĕш съезчĕн, çавăн пекех облаçри XXIV-мĕш партконференцин решенийĕсем тăрăх йĕркелессине вăрахăн пурнăçлаççĕ. Ку ĕçре пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсем пулаççĕ.

Партин хăшпĕр райкомĕсемпе хула комитечĕсем кадрсене парти, совет тата хуçалăх ĕçĕнче ертсе пыракан вырăнсене уйăрса лартнă чухне кадрсене суйласа илмелли парти кăтартса панă принципа пăсаççĕ. Кадрсен политика тĕлĕшĕнчи тата ĕçри пахалăхне çителĕклĕ тĕрĕслесе вĕренмесĕрех вĕсене ертсе пыракан вырăнсене лартаççĕ. Çавăн пирки хăшпĕр чухне ертсе пыракан кадрсем хушшине политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăр, тивĕçлĕ мар çынсем лекеççĕ. Аслăрах вырăна уйăрса лартма кадрсен резервĕ тăвас ĕç çине те кирлĕ пек пăхмаççĕ. Çавăнпа та чылай вырăнсенче ĕçлеме нумай вăхăт хушши çын тупса лартаймаççĕ. Хăшпĕр райкомсем кадрсене çирĕплетес ĕçе вăраха тăсаççĕ, çапла вара работниксене иккĕленсе ĕçлемелле тăваççĕ. Çакна чи малтанах Ишлей, Первомайски тата Етĕрне райкомĕсем пирки каламалла. Работниксем çаплах нумай улшăнса тăраççĕ-ха. КПСС обкомĕн пленумĕ кăтартса хăварнă тăрăх, обком бюровĕ, парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем чылай чухне партипе государство дисциплинине пăсакан работниксемпе килĕшсе лараççĕ, уйрăм работниксем хăйсене тивĕççĕр тыткалани çине кирлĕ пек çавранса пăхмаççĕ. Час-часах вĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçараççĕ, хăш чухне вĕсене критикăран сыхлаççĕ, хўтĕлеççĕ. Партипе совет активне тўрĕ кăмăллă пулма, çитменлĕхсемпе килĕшмелле мар пулма, партипе государство дисциплинине çирĕп пурнăçлама воспитани памаççĕ.

Партин хула тата район комитечĕсем нумайăшĕ, çавăн пекех министерствăсемпе ведомствăсем ертсе пыракан вырăнсене хĕрарăмсене уйăрса лартас ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ.

Уйрăм министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсем кадрсене тĕпчесе вĕренес тата воспитани парас тĕлĕшпе тăтăш ĕçлемеççĕ. Кадрсене политика тĕлĕшĕнчи тата ĕçри пахалăхсене кура суйласа илес вырăнне, час-часах вĕсене туслă пулнипе, пĕр вырăнти çынсем тата тăван-хурăнташсем пулнипе ĕçе илеççĕ. Çавна пула «Чăвашлес» трестра тата «Маслопромра» хăйсен ушкăнĕн интересĕсене партипе государство интересĕсенчен мала хуракан çынсен çемйи пулса тăнă. Кадрсене суйласа илнĕ чухне политика тĕлĕшĕнчен тимсĕр пулнă тата сыхăлăх пулман пирки Суту-илў, Сывлăх министерствисенче тата Чăвашпотребсоюзра аппарата, çавăн пекех вырăнти органсене политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăр, социализмла харпăрлăха çаратакан çынсем лекнĕ. Кадрсене уйăрса лартнă чухне тĕплĕн тĕпчесе вĕренмен тата васканă пирки вĕсене нумай улăштарма лекет. Сăмахран, 1952 çулта Чăвашпотребсоюз системинче кадрсен 29,5 процентне, Суту-илў министерствинче—25 процент, Ялхуçалăх министерствинче 20,5 процент улшăннă. 1953 çулта республикăри 815 колхозра 251 колхоз председателĕ улшăннă, ку вăл мĕнпур колхоз председателĕсенчен 30,7 процент чухлĕ пулать. Уйрăмах Элĕк тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче председательсем нумай улшăннă.

Республикăри промышленноçра тата транспортра кадрсемпе ĕçлес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур. Специалистсем тата массăллă профессиллĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлемелли тата вĕсен пĕлĕвне ўстермелли план пурнăçланса пымасть. Идеологи фронтĕнчи кадрсене — сутĕç органĕсенчи, пичет ĕçĕнчи, наукăпа культура тата искусство учрежденийĕсенчи работниксене суйласа илес, ĕçе лартас тата воспитани парас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур. Чылай министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсем, çавăн пекех КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсем вырăнти совет тата хуçалăх организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем çине çавранса пăхмаççĕ.

КПСС обкомĕн пленумĕ кадрсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Нумай кружоксемпе политшкулсенче занятисене йĕркеллĕ ирттермеççĕ, занятисем идейăпа теори тĕлĕшĕнчен çўлĕ шайра пулмаççĕ. Парти организацийĕсем кадрсем хушшинче марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренессине йĕркелес, хуçалăх кадрĕсен экономикăлла пĕлў парас ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ, ку ĕçре вĕсене сахал пулăшаççĕ.

Парторганизацисем умĕнче çакăн пек задача тăрать: ертсе пыракан кадрсене суйласа илес, ĕçе лартас тата воспитани парас ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле, ку тĕлĕшпе ĕçе партин XIX-мĕш съезчĕ хушнă пек çўлĕрех сыпăка çĕклемелле, кадрсене суйласа илес ĕçре парти кăтартса панă принципсене çирĕп тытса пымалла. Вĕсене политика тĕлĕшĕнчи тата ĕçри пахалăхсене кура суйласа илмелле, партипе государство интересĕсене чун-чĕререн парăннă, ĕçе лайăх пĕлекен тата ăна малалла яма пултаракан çамрăк çынсене ертсе пыракан ĕçе хăюллăнрах лартмалла.

КПСС обкомĕн пленумĕ обком бюровне, КПСС хула комитечĕсемпе райкомĕсене партин шалти ĕçĕн шайне ўстерме, парти комитечĕсен пленумĕсене, парти активĕн тата пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсене йĕркеллĕ ирттерме хушса хăварчĕ. Пленум çавăн пекех пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене суйласа лартас тата воспитани парас ĕçе лайăхлатма хушрĕ.

Пленум республикăри ялхуçалăх органĕсенче тата колхозсенче ертсе пыракан кадрсене çирĕплетме кирлине кăтартса хăварчĕ. Колхоз председателĕсен йышне малалла лайăхлатса пымалла. Çак шутпа ку ĕçе политика тата ĕç тĕлĕшпе тĕрĕсленĕ, вăтам тата аслă ялхуçалăх шкулĕсенчен вĕренсе тухнă çынсене, çавăн пекех ытти специалистсене тата ялхуçалăхне пĕлекен практиксене, коллективлă шултра хуçалăха ертсе пыма пултаракан çынсене лартмалла.

КПСС обкомĕн пленумĕн решенийĕнче профсоюзпа комсомол кадрĕсене, сутуилў, промышленность тата транспорт работникĕсене, совет тата хуçалăх организацийĕсенчи служащисене суйласа илес, ĕçе лартас тата воспитани парас ĕç çине тимлĕ пăхмаллине палăртнă.

Кадрсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парасси парторганизацисен чи кирлĕ ĕçĕ пулса тăрать. Кадрсене марксистла-ленинла пĕлў парас ĕçре тĕрĕслесе тăманни, ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса тăни пулмалла мар. Хăшпĕр ертсе пыракан работниксем хăйсен теорилле пĕлĕвне ўстерме тăрăшмаççĕ. Малашне çак çитменлĕх пулмалла мар. Вĕсене кружоксенче, семинарсенче вĕренме тата политикăна ытти формăсемпе вĕренме хутшăнтармалла. Ертсе пыракан кадрсене çитменлĕхсене тўссе тăман çынсем пулма, политикăлла сыхăлăха ўстерме, партипе государство дисциплинине çирĕп пурнăçлама, парти политикине пурнăçа кĕртессишĕн активлă кĕрешекен боец пулма воспитани памалла.

Критикăпа самокритика, уйрăмах аялтан килекен критика кадрсене воспитани памалли шанчăклă май пулса тăрать. Критика пирĕн кадрсене çитĕнўсене кура кăпăланса ларассине пĕтерме, хăйсен ĕçне тĕрĕс хаклама, çитменлĕхсене уççăн курса вĕсене пĕтерме пулăшать. Парторганизацисен задачи çакăн пек: парти, совет тата хуçалăх аппарачĕсенче пур çĕрте те кадрсене суйласа илес ĕçре парти кăтартса панă принципсене çирĕп тытса пымалла, çакăнпа пĕрлех партипе Совет правительствин решенийĕсене пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăрассине йĕркелемелле.

Кадрсемпе ĕçлессине, партилле-организацилле тата партилле-политикăлла пĕтĕм ĕçе. вăйлатса, парторганизацисем республикăри рабочисене, колхозниксене тата мĕнпур ĕççыннисене промышленноçа, ялхуçалăхĕпе культурăна малалла аталантарассишĕн кĕрешме мобилизацилеме, производство планĕсене тата партипе правительство задачийĕсене тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлăрах сарма пултарĕç.

КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ

КПСС обкомĕн V-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум çак ыйтусене сўтсе яврĕ:

1. Чăваш область парторганизацинче ертсе пыракан кадрсене суйласа илес, вырăна лартас тата вĕрентсе ўстерес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен;

2. Калчасене пăхса ўстерес, тырпул пухса кĕртме тата ялхуçалăх продукчĕсене государствăна пама хатĕрленес тĕлĕшпе облаçри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен.

Малтанхи ыйту тăрăх КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ **Т. А. Ахазов** юлташ доклад турĕ.

Докладчик çакна астутарчĕ: партин XIX-мĕш съезчĕ кадрсене тĕрĕс суйласа илес, ĕçе лартас, воспитани парас, работниксене тĕрĕс суйласа илес тĕлĕшпе парти принципĕсене çирĕп тытса пыма, çак принципсене пăсакансене хирĕç çирĕппĕн кĕрешме, кадрсем суйласа илес ĕç çине бюрократла пăхнине пĕтерме, ертсе пыракан кадрсен йышне лайăхлатма, ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме партипе государство интересĕсемшĕн чĕререн тăрăшакан çынсене, ĕçе лайăх пĕлекен, ăна малалла илсе пыма пултаракан çынсене хăюллăнрах уйăрса лартма, начар, ĕçре пултарайман, кая юлнă, тўрĕ шухăшлă мар çынсене çак ĕçрен кăларса пырас тĕлĕшпе парти органĕсен ĕçне вăйлатма хушрĕ.

Кадрсене тĕрĕс суйласа илес ĕçе тĕрĕс вырнаçтарасси организациллĕ руководствăн паха принципĕ пулса тăрать. Пирĕн парти пăхса ўстернĕ нумай йышлă кадрсем партипе государство руководствин пысăк вăйĕ пулса тăраççĕ. Парти çапла вĕрентет: ĕçри çитĕнўсем çынсенчен, парти çул-йĕрне пурнăçа кĕртекен кадрсенчен килеççĕ. Çавăнпа та кадрсемпе ĕçлессине лайăхлатни хуçалăхпа культура строительствин мĕнпур облаçĕсенче çĕнĕ çитĕнўсем тума кирлĕ услови, КПСС XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă историллĕ задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама кирлĕ услови пулса тăрать.

Малалла Ахазов юлташ ертсе пыракан кадрсен йышĕ çинчен, кадрсемпе ĕçлес тĕлĕшпе обком ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсем çинчен калать. Ленинла-сталинла наци политикине çирĕппĕн пурнăçласа пынипе Чăваш парторганизацийĕ халăх хуçалăхĕ валли, государствăпа парти аппарачĕ валли нумай йышлă кадрсем хатĕрлеме тата пăхса ўстерме пултарчĕ. 1952 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне хатĕрленĕ сведенисем тăрăх, республика промышленноçĕнче, ялхуçалăхĕнче тата социальнăйпа культура учрежденийĕсенче, государство аппарачĕпе парти аппаратĕнче аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсем 6.890 çын, вăтам пĕлў илнĕ работниксем 15 пин çынна яхăн ĕçленĕ. Республикăри аслă шкулсемпе специальнăй вăтам шкулсем 1946 çултан пуçласа 1952 çула çитиччен 13.386 специалист вĕрентсе кăларнă. Нумай йышлă кадрсемпе специалистсем вĕрентсе хатĕрлени Коммунистсен партийĕпе Совет государстви чăваш халăхĕн хуçалăхпа культура строительствине ўстерессишĕн куллен тăрăшни çинчен калать.

Ахазов юлташ парти, совет, хуçалăх тата ытти органсен ертсе пыракан йышĕ çинчен калакан сведенисем илсе кăтартать. Хальхи вăхăтра обком номенклатурине 1.434 должность кĕрет, вĕсенчен 1.392 должность валли кăна кадрсем тупса çитернĕ. Юлашки вăхăтра обком бюровĕ ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме çамрăк кадрсене хăюллăрах уйăрса лартма тытăнчĕ. Иртнĕ çулталăк хушшинче тата кăçалхи тăватă уйăх хушшинче ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме 510 çын уйăрса лартнă. Вĕсен шутĕнче: хĕрарăмсем — 12,7 процент, чăвашсем—72,4 процент.

Партин Центральнăй Комитечĕ йышăннă тăрăх, Октябрьски, Чурачăк, Шăмăршă тата Шупашкар районĕсенчи ертсе пыракан органсене кадрсемпе тĕреклетме кирлĕ ĕçсене тунă.

Юлашки çулсем хушшинче ертсе пыракан кадрсем мĕн чухлĕ вĕренни тĕлĕшĕнче хăшпĕр улшăнусем пулчĕç. Работниксем хушшинче аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем хальхи вăхăтра 26,3 процент, аслă шкулсенчен вĕренсе пĕтерменнисем 15,5 процент шутланаççĕ, пуçламăш шкулсенче çеç вĕреннисем пурĕ те 2,9 процент кăна.

Докладчик çавăнпа пĕрлех обком, хула комитечĕсемпе райкомсем кадрсемпе ĕçлес тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕсене партин XIX-мĕш съезчĕ хушнă пек улăштарса çĕнетменнине палăртать.

Чăваш обкомĕн отчечĕ тăрăх КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленире ертсе пыракан кадрсене суйласа илес, ĕçе лартас тата воспитани парас тĕлĕшпе палăртнă çитменлĕхсемпе йăнăшсем, çавăн пекех тата Чăваш парторганизацийĕн юлашки конференцийĕ йышăннă решенире палăртнă çитменлĕхсемпе йăнăшсем хальхи вăхăтра та палăраççĕ. Çак çитменлĕхсемпе йăнăшсем вĕсем, тĕпрен илсен, кадрсене суйласа илес ĕçри партилле принципа пăсни, кадрсем час-часах улшăнса тăни, вĕсене политикăлла воспитани парас тата вĕсен ĕçри квалификацине хăпартас ĕçсем çителĕксĕр пулса пынинчен килеççĕ.

Обком пайĕсем кадрсене сăнаса вĕренес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Кадрсене сăнаса вĕренесси вĕсене обком бюровĕнче çирĕплетме тăратас умĕн кăна пулса пырать. Паллах, ĕçе уйăрса лартма палăртнă работниксемпе çакăн пек кĕске вăхăт хушши кăна тĕл пулни вĕсен политикăлла тата ĕçлĕхлĕ пахалăхне вĕçне çитиччен пĕлсе çитме май памасть.

Кадрсене сăнаса вĕренес тата суйласа илес ĕç çине канцелярилле, бюрократла пăхни пысăк сиен кўрет. Работниксене анкетăра, справкăсенче кăтартнă сведенисем тăрăх, пур енчен те тĕплĕн тĕрĕслесе пăхмасăр суйласа илни те сайра хутра мар пулать.

Ĕçе уйăрса лартнă чухне кадрсене тĕплĕн сăнаса вĕренмен пирки хăшпĕр чухне ертсе пыракан вырăна ăнсăртран килсе тухнă, политика енчен шанăçсăр, хушнă ĕçе туса пыма пултарайман çынсем кĕрсе каяççĕ. Ахазов юлташ кадрсене суйласа илес тĕлĕшпе Улатăрпа Шăхасан райкомĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсене илсе кăтартать. Унта ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме политика тĕлĕшĕнчен шанăçсăр çынсене уйăрса лартнисем те пулнă.

Кадрсене суйласа илмелли партилле принципа обком бюровĕ енчен те пăснисем пулнă.

Кадрсене çиелтен пăхса суйласа илни тата ку ĕçри йăнăшсем—кадрсем тăтăшах улшăнса тăрасси патне илсе пыраççĕ. 1952 çулта тата кăçалхи 4 уйăх хушшинче ертсе пыракан работниксенчен 565 çын улшăннă. Вĕсенчен служба вырăнĕпе уса курса киревсĕр ĕçсем тунăшăн, ĕçлеме пултарайманшăн тата ятне янăшăн 186 çынна ĕçрен кăларнă, ку вăл улшăннă мĕнпур работниксенчен 32,9 процент пулать. Вĕсен шутĕнче КПСС хула комитечĕсемпе райком секретарĕсем—12 çын, райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе вĕсен заместителĕсем—12 çын.

Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче çапла каларĕ: «Пысăк киревсĕрлĕх çакă пулса тăрать: пирĕн сахал мар работниксем парти решенийĕсемпе совет законĕсем вĕсемшĕн обязательнă мар тесе шутлаççĕ... Çакнашкал «руководительсем» хăйсене тем тума та, государствăпа парти йĕркисене пăсма та, совет законĕсене пăсма та, иртĕхме те, пуççăрланма та юрать, тесе шутлаççĕ».

Çакнашкал юрăхсăр «руководительсем», тесе калать докладчик, пирĕн республикăра та пур. Çакăн пек çынсен шутне Вăрнар вăрманпромхоз директорĕ пулнă П. В. Васильев юлташа кĕртме пулать. Вăл законсăр ĕçсем тунă, государство вăрманне йўнĕ хакпа уйрăм çынсене валеççе панă тата ытти çавнашкал юрăхсăр ĕçсем туса пурăннă.

Йĕпреç вăрманпромхозĕн директорĕ пулнă Цветков та хăйĕн пурлăхĕпе государство пурлăхĕ хушшинче уйрăмлăх пуррине манса кайнă. Вăл нарядсăр-мĕнсĕр 200 кубометр ытла хăма сутса янă, хăйĕн тăванĕсене строительство материалĕсем парса тăнă, вăрманпромхоз валли уйăрнă çаран çинчен кашни çул, рабочисене тўлевсĕр ĕçлеттерсе, утă илсе тăнă тата ытти киревсĕр ĕçсем те тунă.

Çав работниксем хăйсене çавнашкал киревсĕр тыткалани парти организацийĕсем, Вăрнар райкомĕпе Йĕпреç райкомĕ вĕсен юрăхсăр ĕçĕсене вăхăтра пĕтерсе лартас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнманнинчен, вĕсене ытлашши ирĕк панинчен килнĕ.

КПСС обкомĕн бюровĕ Васильева ĕçрен кăларчĕ, парти енĕпе хыттăн айăпламалла турĕ, государствăна кўнĕ сиеншĕн тўлесе татма хушрĕ. Цветкова обком бюровĕ партирен те, ĕçрен те кăларнă.

Обком бюровĕ чылай работниксене партие улталанăшăн тата йăлара хăйсене тĕрĕс мар тыткаланăшăн хыттăн айăпланă. Партипе совет ĕçĕнчи ертсе пыракан уйрăм руководительсене ĕçрен тата партирен кăларнă. Партипе совет ĕçĕнчи хăшпĕр ертсе пыракан работниксене ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснăшăн хытă айăпланă, партирен кăларнисем те пулнă.

1951—1952 çулсем хушшинче обком аппарачĕ 20 райкомпа хула комитечĕсен, 22 министерствăпа ведомство ĕçĕсене кадрсемпе мĕнле ĕçлени енчен тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕсленĕ чухне те, кадрсене çирĕплетнĕ чухне те КПСС обкомĕ хула комитечĕсемпе райкомсене, министерствăсемпе ведомствăсене кадрсем суйласа илес ĕç çине уйрăмах тĕплĕн пăхма кирлине кăтартса панă. Иртнĕ çулталăк хушшинче тата кăçалхи тăватă уйăх хушшинче çирĕплетме тăратнă 23 кандидатурăна обком йышăнман. Анчах та нумай райкомсем, çавăн пекех тата министерствăсемпе ведомствăсем çакăнтан хăйсем валли кў тăранччĕнех тивĕçлĕ выводсем туман, кадрсем суйласа илес ĕçре çаплах пысăк йăнăшсем тăваççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕ çапла вĕрентет: кадрсене тĕрĕс суйласа илес тата вĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарас тени кадрсене вĕсен политикăлла тата ĕçлĕхлĕ пахалăхĕ тăрăх тĕрĕслесе илес тенине, работниксене лайăх пĕлес тенине, вĕсен пахалăхĕпе çитменлĕхĕсене тĕпчесе пĕлес тенине, кашни работник хăй вырăнĕнче пулмалла тăвас тенине пĕлтерет. Ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме кирлĕ таран кадрсен резервĕ туса хурас тесен, вăя шеллемесĕр ĕçлемелле, çĕнĕ çынсене вăхăтра тата хăюллăн ĕçе уйăрса лартмалла.

Парти çакăн пек хушнине обком тата хула комитечĕсемпе райкомсем, çавăн пекех советпа хуçалăх органĕсем çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ. Чылай чухне парти обкомĕн пайĕсенче тата министерствăсемпе ведомствăсенче çакнашкал резерв хут çинче кăна шутланать.

Малалла Ахазов юлташ кадрсем суйласа илес, вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе КПСС хула комитечĕсемпе райкомĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен калать. Муркаш, Ишлей, Первомайски, Çĕрпў, Етĕрне тата Йĕпреç райкомĕсем хăйсен номенклатурине кĕрекен должноçсенче ĕçлеме кирлĕ çынсене тупса çитерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тумаççĕ. Хăшпĕр райкомсенче, сăмахран, Куславкка, Елчĕк тата ытти райкомсенче ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме кирлĕ работниксене уйăрнă чухне вĕсен ĕçлĕхлĕ тата политикăлла пахалăхне тĕплĕн тĕрĕслесе тухмаççĕ. Хăшпĕр райкомсем ертсе пыракан кадрсене çирĕплетсе пырас вырăнне, ĕçе юхăнтарса янă работниксене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартнипе лăпланса лараççĕ.

Парти райкомĕсем колхоз кадрĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе те пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсем тăваççĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕ колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене ялхуçалăх специалисчĕсен шучĕпе тĕреклетме кирли çинчен кăтартса пани çителĕксĕр пурнăçланса пырать. Колхоз председателĕсем час-часах улшăннине халĕ те пĕтермен. Кадрсене начар пĕлнипе колхоз председателĕсене çиелтен кăна суйласа илни Шăмăршă, Калинино, Хĕрлĕ Чутай тата ытти районсенче те пулнă.

Колхоз председателĕсен ĕçри квалификацине хăпартасси çителĕксĕр пулса пырать.

— Пирĕн задача çакăн пек,—тет Ахазов юлташ,— колхоз кадрĕсене чăннипе сăнаса вĕренмелле, вĕсене хаклама тата ўстерсе пыма пĕлмелле, вĕсен ĕçри квалификацине хăпартмалла, тăтăшах воспитани памалла, вăхăтра тўрленме пулăшмалла, вĕсен ответлăхне ўстермелле.

(Малалли 2-мĕш стр.).

РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔСЕНЧЕ

★ ★ ★

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче çураки ĕçĕсемпе ирхи çĕртме тăвасси тата тислĕк кăларасси мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

1953 çулхи июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Çуртри акнă	Хуратул	Йĕтĕн	Кантăр	Çĕрулми лартнă	Пахча çимĕç	Çĕртме тунă	Тислĕк кăларнă
Первомайски	103	100	101	101	101	72	63	40
Ишлей	103	100	—	98	101	90	92	37
Советски	102	98	—	96	99	53	78	53
Шăхасан	102	96	—	85	102	76	84	60
Чкаловски	102	87	—	100	100	80	77	72
Комсомольски	102	98	—	94	100	71	83	56
Елчĕк	102	97	—	99	100	86	75	74
Красноармейски	102	79	—	91	100	83	74	83
Вăрмар	102	90	—	80	95	79	62	45
Етĕрне	102	61	125	86	98	41	43	43
Муркаш	101	96	—	76	100	59	64	74
Сĕнтĕр	101	97	—	91	97	44	70	75
Çĕрпў	101	93	—	95	102	44	62	66
Шупашкар	101	100	—	100	100	68	89	45
Канаш	101	80	—	82	99	49	59	53
Элĕк	101	81	—	98	100	48	87	31
Шăмăршă	101	89	—	79	96	40	80	25
Чурачăк	100	89	—	82	101	59	62	46
Йĕпреç	100	89	106	84	98	52	63	33
Октябрьски	100	78	—	86	98	43	73	21
Куславкка	100	91	—	65	99	56	72	22
Тăвай	100	86	—	73	100	92	75	42
Сĕнтĕрвăрри	99	91	—	85	92	40	59	69
Калинино	99	51	—	91	103	68	61	55
Вăрнар	97	97	123	89	105	46	61	83
Кувакино	96	54	73	—	92	28	109	15
Хĕрлĕ Чутай	96	75	171	66	95	42	54	24
Çĕмĕрле	95	103	89	140	89	39	46	28
Улатăр	95	63	75	98	70	45	65	20
Пăрачкав	85	12	70	—	89	40	76	23

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чкаловски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозăн люцерна хирĕнче. Колхозниксем çумкурăксене тасатаççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоўкерчĕкĕ.

Çĕртме туса пĕтерне

КЎКЕÇ. Хыркасси ял Советне кĕрекен «Актив» колхоз членĕсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пысăк çĕкленўпе туса пыраççĕ. Çуракине пысăк пахалăхпа иртернĕ, çĕрулми лартмалли плана вăхăтра пурнăçланă.

Бригадăсем çĕртме тăвас ĕçе те лайăх йĕркелерĕç. Хĕлле кăларнă тислĕке салатса, ирхи çĕртме сўхине 20—22 сантиметр тарăнăш сухаланă, плана июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Халĕ пур бригадăсенче тислĕк кăлараççĕ тата пахча çимĕç лартса пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Тислĕке пысăк купасем тăваççĕ, çиелтен тăпрапа витсе пусăрăнтараççĕ.

Н. ДАНИЛОВА.

КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Парти райкомĕсем колхозсенчи ертсе пыракан кадрсемпе ĕçлессине лайăхлатнă пулсан, ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçлама «уполномоченнăйсем» ярас сиенлĕ практикăна тахçанах пĕтернĕ пулĕччĕç, кун йыратне вĕсем партилле-политикăлла ĕç çине ытларах пăхнă пулĕччĕç. Шел пулсан та, партин уйрăм райкомĕсем колхозсене ертсе пырас ыйтăва нумай вăхăтлăха уполномоченнăйсем уйăрса янипе татса пама тăрăшаççĕ. Çак уполномоченнăйсем колхоз председателĕсем çумĕнче «хистесе тăракансем» пулса тăраççĕ. Вĕсем парти организацийĕсене шута илмесĕр ĕçлеççĕ, масса хушшинче политикăлла ĕç туса пымаççĕ. Колхозри парторганизацисен шăпах та ĕнтĕ политикăлла ĕçсене вăйлатмалла кирлĕ.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен колхоз председателĕсене, çавăн пекех тата парти, совет, хуçалăх аппаратĕнчи мĕнпур работниксене партипе государство дисциплинине çирĕппĕн тытса пыма воспитани парасси çине ытларах пăхмалла, воспитани парас вырăнне административлă ĕçсем туни тата парти енĕпе наказани памалла туни пулмалла мар.

Советпа хуçалăх организацийĕсенчи кадрсемпе ĕçлес енĕпе пулакан çитменлĕхсем çинчен каласа, Ахазов юлташ çакна кăтартса парать: чылай министерствăсемпе ведомствăсенче кадрсене тĕрĕс тата вăхăтра ĕçе лартмаççĕ, ĕçĕн татса паракан участокĕсенче ĕçлеме юрăхлă çынсене уйăрса лартмаççĕ, кадрсене суйласа илес тĕлĕшпе йăнăшсем тăваççĕ. Ку вăл чи малтан акă мĕншĕн çавăн пек пулать: министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсем кадрсене суйласа илессине тата ĕçе лартассине пĕтĕмпех кадрсен пайĕсен работникĕсене е кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен помощникĕсене шанса параççĕ. Çав вăхăтрах унта чылай чухне кадрсемпе ĕçлессине лайăх йĕркелеме пултарайман çынсем, кадрсене вĕренес тата воспитани парас тĕлĕшпе, уйрăмах резерв туса хурас тĕлĕшпе куллен ĕçлесе пыма пултарайман çынсем пулаççĕ.

Республикăри Ялхуçалăх министерствинче кадрсемпе начар ĕçленĕ. Кадрсемпе Вырăнти промышленность министерствин системинче те начар ĕçлеççĕ. Çак министерство системинче производство ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем, пуринчен ытла, кадрсемпе çителĕксĕр ĕçленинчен килеççĕ. Кадрсем суйласа илес тата вĕсене воспитани парас ĕç «Чăвашвăрман» трестĕнче питех те çителĕксĕр тăрать. Кунта кадрсене суйласа илмелли партилле принципа пăсаççĕ. Трест аппаратĕнче пĕр-пĕринпе сывăх çынсен çемйи пулса тăнă. Вăл çынсем час-часах хăйсен ĕçĕсене туса пыма юрăхлă мар. Пĕр-пĕрин хушшинче мирлĕ пурăнма тăрăшаççĕ, пĕр-пĕрне кӳрентересшĕн мар, сӳп-çапа пӳртрен кăларасшăн мар. Трест управляющийĕ Киркин юлташ аппаратра кирлĕ йĕрке туса хума мĕн кирлине тумасть. Киркин юлташ трестра нумай вăхăт хушши ĕçленипе çак çитменлĕхсемпе хăнăхса çитнĕ, ĕçре кирлĕ вичкĕнлĕхе çухатнă.

Промышленноçра тата транспорт предприятийĕсенче кадрсем тĕлĕшпе ĕçсем çителĕксĕр тăнăшăн, чылай енчен, обкомăн промышленноçпа транспорт пайĕ тата халиччен пулнă вăрман пайĕ айăплă. Вĕсем кадрсемпе ĕçлессине тĕплĕн туса пыман, министерствăсемпе ведомствăсене çак ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе пулăшман.

Финанс органĕсенче кадрсемпе ĕçлес енĕпе тĕп çитменлĕх, халичченхи пекех, кадрсем тăтăшах улшăнса тăни пулать.

Финанс работникĕсен политикăлла ăнланулăхĕ çителĕклĕ пулманни пирки тата вĕсем кирлĕ пек вĕренсе хатĕрленсе çитменнине пула финанс органĕсенче нумайăшĕнче пысăк йăнăшсем тăваççĕ. Çакăн çинчен налог тӳлекенсенчен жалобăсем нумай килни калать. Финанс министрĕн Сомов юлташăн, çавăн пекех тата КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен финанс кадрĕсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла.

Суту-илӳ кадрĕсене суйласа илсе воспитани парасси те çителĕксĕр пулса пырать. Суту-илӳ организацийĕсенче çакăн пек сиенлĕ практика пур: кунта пĕр вырăнта шанăçсăра тухнă работника тепĕр вырăна куçараççĕ; чылай чухне пурлăхшăн ответлă пулмалли вырăнсенче ĕçлеме документсемсĕр тата тĕрĕслесе пăхман çынсене илеççĕ.

Потребительсен кооперацийĕнче тата РСФСР Вăрманпа хут промышленность министерстви Чăваш АССР-ĕнчи УРС-ĕн системинче те кадрсемпе ĕçлессине япăх туса пыраççĕ.

Кадрсене суйласа илес ĕç çине тимсĕр пăхнă пирки тата растратчиксене çемçен тыткаланă пирки республикăри суту-илӳ организацийĕсенче растратăсемпе çаратусем нумай пулаççĕ.

Республикăри Сывлăх министерствинче те кадрсене суйласа илес ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтерсе çитермен-ха. Сывлăх министерстви работникĕсене ĕçе илесси тата ĕçрен кăларасси çинчен тăракан ыйтăва татса панă чухне час-часах партипе совет органĕсен шухăшне шута илмест. Çавăн пирки те васкавлă та тĕрĕс мар вывodсем тăвать, хушнă ĕçе пĕр хут кăна мар путлантарса лартнă работниксене ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме лартать.

Нумай медицина учрежденийĕсенче партилле-политикăлла ĕçе начар йĕркеленĕ, медицина работникĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ.

Докладчик республикăри Сутĕç министерствинче кадрсемпе ĕçлес ĕçе питех те япăхтарса çитерни çинчен калать. Сутĕç министрĕ Токарев юлташ кадрсене тĕпчесе пĕлес ĕç çине çиелтен пăхни кадрсем час-часах улшăнса тăрасси патне илсе çитернĕ.

Чылай чухне КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсем, министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсене тишкермесĕр хаклаççĕ, вĕсенчен ытларах ыйтма тăрăшмаççĕ, работник дисциплинăна пăсни çине пӳрне витĕр пăхаççĕ. Çавăн пирки те хăшпĕр ертсе пыракан работниксем мухтанма пуçлаççĕ, тунă йăнăшсене пытарса тăма пăхаççĕ, сивĕч критикăран пăрăнса юлма тăрăшаççĕ. Çакă вăл ĕçе пысăк сиен кӳрет тата работниксене хăйсене те пĕтерет. Çавăн пирки те нумай юлташсене хăйсен вырăнĕсенчен кăларма тата хытă айăплама тивет.

Малалла Ахазов юлташ кадрсене суйласа илес, ĕçе лартас тата воспитани парас ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтерме мĕн тумалли çинчен калать.

Ертсе пыракан работниксен йышне тĕреклетме обком бюровĕн, хула комитечĕсемпе райкомсен хăйсен ĕçне партин XIX-мĕш съезчĕ хушнă пек хăвăртрах улăштарса çĕнетмелле, работниксене суйласа илес тата çăнаса вĕренес ĕçе лайăхрах организацилемелле, çак ĕç çине çиелтен пăхас сиенлĕ йăлана, кадрсемпе ĕçлес ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтермелле. Парти организацийĕсен пирĕн аппаратăн мĕнпур сыпăкĕсенче кадрсене вĕсен политикăлла тата ĕçлĕхлĕ пахалăхĕ тăрăх суйласа илес тата ĕçе лартас тĕлĕшпе парти кăтартса панă принципсене çирĕппĕн тытса тăмалла тăвас пулать. Çемьелĕхе тата пĕр-пĕрне вырăнсăр хӳтĕлеме пăхнине хирĕç çирĕппĕн кĕрешмелле, кадрсене суйласа илес тата çăнаса вĕренес ĕç çине бюрократла пăхнине пĕтермелле.

Парти обкомĕн бюровĕн, парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен партилле-организацилле ĕçе тата çӳлĕрех пусăма çĕклемелле, совет тата хуçалăх организацийĕсенче кадрсемпе ĕçлесси мĕнле пулса пынине тĕрĕслесе тăмалла, вĕсене пĕрмаях кадрсемпе çирĕплетсе пымалла, парти комитечĕсен хуçалăх ĕçĕсене çав органсем урлă ертсе пымалла.

Çамрăк кадрсене пысăкрах ĕçе лартас тĕлĕшпе хăюсăрлăх пулнине пĕтермелле. Çамрăк кадрсене пысăкрах ĕçе хăюллăн лартса пыман пирки эпир хăшпĕр чухне ятне янă, пурнăçран кая юлнă кадрсене ĕçре тытса тăратпăр, ку вăл ĕçе сиен кӳрет.

Парти организацийĕсен, совет тата хуçалăх органĕсене ертсе пыракан руководительсен пысăкрах ĕçе лартмалли кадрсен резервне ӳстерес тĕлĕшпе куллен-кун ĕçлесе пымалла. Кашни должность валли резерв туса хумалла, çав резерва палăртса хумалла кăна мар, ăна практикăлла ĕçре тата ответлă порученисем парса пĕрмаях тĕрĕслесе пымалла, ертсе пырас ĕç валли çамрăк кадрсем хатĕрлес ĕçе тума вăхăта шеллемелле мар.

Кадрсене суйласа илесси тата ĕçе лартасси партилле-организацилле пĕтĕм ĕçе вăйлатассипе тачă çыхăнса тăрать. Парти вĕрентĕр тăрăх, кадрсене суйласа илесси тата решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе пырасси организацилле ĕçре тĕп вырăнта пулмалла. Решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслени тĕллевĕ, пуринчен малтан, çитменлĕхсене тупса палăртасси, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен работниксене хăйсен йăнăшĕсене тӳрлетме пулăшасси, йышăннă решение пурнăçласа çитересси пулать.

Çавăнпа пĕрлех ĕçлеме пултарайман, кая юлнă, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемен работниксене ĕçрен сирсе ямалла, вĕсен вырăнне чи лайăх çынсене лартмалла. Ĕçе малалла яма пултаракан, государство интересĕсемшĕн кĕрешекен пултаруллă çĕнĕ çынсене аслăрах ĕçсене хăюллăн лартса пымалла.

Кадрсене суйласа илессине тата ĕçе лартассине пур майсемпе те лайăхлатнипе пĕрлех, парти органĕсен кадрсене воспитани парассишĕн ответлă пулни çинчен яланах асра тытас пулать. Кадрсене аслăрах ĕçе лартассине тата суйласа илессине лайăх йĕркеленĕ чухне, кадрсен политикăлла тата теорилле пĕлĕвĕсене ӳстерес ĕçе пултарассишĕн тăрăшмасан, вĕсем хушнă ĕçе суккăра, механически туса пыракан, хăйсен ĕçне партипе государство интересĕсемпе çыхăнтарма пултарайман çынсем пулса кайма пултараççĕ.

Кадрсене тĕрĕс вĕрентсе ӳстересси работниксен идейăлла-теорилле пĕлĕвне тата ĕçри квалификацине ӳстерсе пырассишĕн кулленех тăрăшмаллине, социализм строительствин опычĕне пĕрмаях вĕренсе пымаллине, ертсе пырас ĕçре пĕлӳсемпе творчествăлла усă курмаллине, çитменлĕхсемпе тата йăнăшсемпе килĕшсе тăмалла маррине, хăйсенчен тата хăйсене пăхăнса тăракан работниксенчен ытларах ыйтмаллине, государство интересĕсене харпăрхăй интересĕсенчен мала хумаллине пĕлтерет.

Ахазов юлташ малалла харпăрхăйĕн идейăлла-политикăлла шайне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлемен работниксене сивĕччĕн критиклет. Вăл кадрсен политикăлла вĕренĕве тĕрĕслесе тăрас ĕçе вăйлатма кирлине, ертсе пыракан кадрсем пурте хăйсен идейăлла-теорилле шайне ӳстересшĕн тăтăшах ĕçлемелле туса çитермелле, çав кадрсем хăйсен ĕç планне хатĕрленĕ чухне кăна мар, çавăн пекех пĕлĕвĕсене тата та опычĕпе те тивĕçлĕ шайра тытма пулмалла пулни палăртать.

Пуçламăш парторганизацисен секретарĕсемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмалла, вĕсемпе парти теорийĕпе историйĕн, парти строительствин ыйтăвĕсем тăрăх яланах семинарсем иртермелле, пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе паллаштарма тăрăшмалла.

Ертсе пырас ĕçе хĕрарăмсене уйăрса лартассине хакламаннине тата çак ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтерес пулать.

Комсомол тата профсоюз кадрĕсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла.

Парти райкомĕсен задачи — колхозсене ĕçре тĕрĕсленнĕ, тӳрĕ кăмăллă ертсе пыракан кадрсемпе çирĕплетесси, колхоз председателĕсем пулма ялхуçалăх специалисчĕсене лартас тĕлĕшпе парти панă директивăна пурнăçласси пулать. Колхозсенчи кадрсене ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле, колхоз председателĕсене, бригадирсене тата колхозри ытти кадрсене пĕрмаях вĕрентсе пымалла, вĕсене малта пыракан колхозсен опычĕпе хĕпăшаллантармалла тата çав опыта пурнăçа кĕртсе пымалла.

Промышленноçпа стройкăсем валли ертсе пыракан тата техникăлла кадрсем, уйрăмах инженерсем вĕрентсе хатĕрлесси хăвăртрах татса памалли ыйту пулса тăрать. Республикăра çак кадрсем çитмеççĕ. Юлашки çулсенче пирĕн республикăра промышленность иртнĕ вăхăтринчен чылай хăвăртрах аталанса пырать. Халĕ ĕçлекен предприятисене пысăклатнипе пĕрлех, пысăк пир-авăр комбиначĕ тата ытти предприятисем тăваççĕ, пурăнмалли çуртсем тата культурăпа йăла учрежденийĕсем тăвасси ӳссех пырать. Çакă вăра промышленность валли кадрсем тĕлĕшпе пысăк ыйту кăларса тăратать. Çавăнпа та вырăнта квалификациллĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлесси çине питех те тимлĕн пăхмалла.

Творчествăллă организацисенчи кадрсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла, писательсене, художниксене, композиторсене, артистсене литературăпа искусствăн илемĕпе илемлĕх енчен питĕ паха произведенийĕсене тăвас ĕçре партипе халăх умĕнче хăйсен ответлăхне туйса тăма вĕрентмелле.

Юлашкинчен Ахазов юлташ пур ĕçсенче те, уйрăмах идеологи фронтĕнче пирĕн кадрсен сыхлăхне ӳстерме кирли çинчен, идеологи фрончĕ марксизм-ленинизмшăн тăшманла шухăшсем пырса кĕме пултаракан вырăн пулни çинчен, пирĕн кадрсене совет патриотизмĕн шухăшĕпе, пирĕн Тăван çĕршывăн вăй-хăвачĕн иксĕлми çăлкуçĕ пулса тăракан халăхсен пĕрлалăхĕпе тăванлăхĕн шухăшĕпе вĕрентсе ӳстермелли çинчен калать.

Пирĕн кадрсен ĕçри çитменлĕхсем çинчен сивĕч, принципла тата ĕçлĕ критикăна сарса пыма пур майсемпе те пулăшса пымалла, критикăна путаракансене çирĕп ответ тыттармалла.

Пирĕн задача çакă пулать: партилле сивĕч критикăна сарса пырса, ĕçри çитменлĕхсене тупса палăртмалла тата пĕтерсе пымалла, кадрсене партипе правительство директивисене пурнăçлас ĕç çине тӳрĕ кăмăлла пăхма вĕрентмелле, вĕсен партипе халăх умĕнчи ответлăхне ӳстермелле; партипе государство дисциплинине пăсакансене хирĕç, ертсе пыракан кадрсен пĕр пайĕ хушшинче вак буржуалла чарусăрлăх пулнине хирĕç тăтăлнах кĕрешсе пымалла.

Ертсе пыракан работниксем анлă массăсемпе çыхăну тытассине тата ытларах тĕреклетмелле, массăлла-политикăлла ĕçе активлă хутшăнмалла, массăсене государство заданийĕсемпе планĕсене пурнăçа кĕртме мобилизацилемелле, социализмла ăмăртăвăн чăн-чăн организаторĕсем пулмалла.

Республика умĕнче тăракан питĕ пысăк задачăсене партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсене вăйлатса пырсан çеç ăнăçлă пурнăçа кĕртме пулать.

Кадрсене суйласа илес, ĕçе лартас тата вĕрентсе пырас ĕçе лайăхлатни республикăри парти организацийĕ умĕнче тăракан мĕнпур хуçалăхла-политикăлла задачăсене вăхăтра тата ăнăçлă пурнăçа кĕртме май парĕ.

* * *

Ахазов юлташ доклачĕ тăрăх прениre 15 çын тухса каланă.

Сăмах КПСС Шăмăршă райкомĕн секретарĕ **Иванов** юлташ илет. Вăл юлашки вăхăтра парти райкомĕ кадрсем суйласа илес, вĕсене воспитани парас тата ĕçе уйăрса лартас ĕçсене кăштах лайăхлатни çинчен калать. Уйрăммăн илсен, райкомпа ертсе пыракан ĕçе хĕрарăмсене уйăрса лартасси çине тимлĕн пăхаççĕ. Парти райкомĕ партипе комсомол организацийĕсен секретарĕсене воспитани парасси тата вĕсене инструктаж парасси çине те ытларах пăхма пуçланă. Райкомпа райсовет исполкомĕ колхоз председателĕсем валли ял Совет председателĕсен семинарĕсене вăхăтра иртерет.

Анчах та, тет Иванов юлташ, райкомра кадрсене суйласа илсе ĕçе уйăрса лартас тĕлĕшпе халĕ те пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Колхоз бригадирĕсем, вылăхчĕрлĕх пăхакансем, механизаторсем хушшинчи ĕç çителĕксĕр пырать. Ертсе пыракан работниксем марксизм-ленинизм теорине мĕнле вĕреннине райком çителĕксĕр тĕрĕслесе тăрать. Районти советпа хуçалăх организацийĕсенче ĕçлекен кадрсене ертсе пырас ĕçре те çитменлĕхсем нумай.

Иванов юлташ республикăри организацисен ĕçĕсене критиклет, кадрсене ĕçлес тĕлĕшпе райком парти обкомĕнчен тивĕçлĕ пулăшу илменнине кăтартса парать. Обком инструкторĕсем парти кадрĕсене инструктаж парассинчен ытларах вăхăта тĕрлĕ йышши справкăсем пухнипе иртереççĕ. Вăл çавăн пекех кинофикаци управленийĕн, Вырăнти промышленность министрĕн Бобров юлташăн, Сывлăх министрĕн Ефимова юлташăн ĕçĕсене, Шăмăршă районĕ валли кадрсем тĕрĕс уйăрса паманшăн, критиклет.

Хусан чугун çулĕн Улатăр уйрăмĕн политотдел начальникĕ **Поляков** юлташ чугун çул транспортĕнче пысăк квалификациллĕ нумай йышлă кадрсем çитĕнтерни çинчен калать. Анчах Улатăр уйрăмĕнче кадрсене суйласа илес, ĕçе вырнаçтарса тухас тĕлĕшпе çитменлĕхсем пур-ха. Хăшпĕр чухне ĕçе пултараймасăр, хатĕрленсе çитмен тата шанма çук çынсене ĕçе уйăрса лартаççĕ. Шигаевпа Салов юлташсем локомотивпа эксплуатаци пайĕсенче кадрсене суйласа илес ĕçе вырнаçтармалли партилле принципа сĕмсĕррĕн пăсаççĕ. Вĕсем хăйсен ятне çухатнă çынсене ытти ответлă вырăнсене куçарса лартаççĕ. Ку тĕлĕшпе Хусан чугун çулĕн руководстви тĕрĕс мар тăвать. Унта ĕçлекенсем хăйсен ятне çухатнă работниксене тепĕр ĕçе е малтан ĕçленĕ вырăнах, е тата та ответлăрах вырăна куçараççĕ.

Улатăр уйрăмĕнчи нумай работниксем хăйсен квалификацине тата идейăлла-политикăлла шайне ӳстерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Политотдел тата пуçламăш парторганизацисем кадрсене суйласа илсе воспитани парас ĕç çине тимлĕрех пăхма пуçларĕç. Анчах политотдел партин XIX-мĕш съезчĕ кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарса тухас тата воспитани парас тĕлĕшпе йышăннă решенисене çителĕксĕр пурнăçлать.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕн заместителĕ **Митьков** юлташ совет аппаратĕнче ĕçлекен кадрсем çинчен тăракан ыйту пирки ытларах калать. Совет работникĕсен йышĕ тăтăшах лайăхланса пырать. Анчах совет кадрсене суйласа илес, ĕçе вырнаçтарса тухас тата воспитани парас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ-ха. Совет ĕçĕнче ĕçлеме çителĕклĕ таран тĕрĕслесе пăхман тата хăйсен ятне çухатнă çынсене уйăрса лартнисем те пулаççĕ. Кадрсем улшăнса тăни ытла та пысăк. Тĕслĕхрен, вырăнти Советсен суйлавĕ вăхăтĕнче ял Совет председателĕсем çуррине яхăн, ял Совет секретарĕсем 39 процент таран улшăннă. Ял Совет председателĕсемпе секретарĕсем уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Етĕрне, Калинино, Красноармейски, Çĕрпӳ районĕсенче пысăккăн улшăнса тăраççĕ. Партипе совет органĕсем совет кадрĕсене суйласа илсе воспитани парассине лайăхлатмалла.

Митьков юлташ çавăн пекех тата колхоз председателĕсем час-часах улшăнса тăни çинчен калать. Калинино районĕнчи Шверник ячĕпе тăракан колхозра 1951 çултан пуçласа виççĕмĕш председатель ĕçлет. Çавăнпа та колхоз кая юлса пынинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Колхоз председателĕсене суйласа илесси çине кирлĕ пек пăхманнине тататлăн пĕтермелле.

Оратор çавăн пекех Етĕрне районĕн руководителĕсене вĕсем колхоз председателĕсене партипе государство дисциплинине çирĕппĕн тытса пыма воспитани паманшăн критиклет.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **Коротков** юлташ Ахазов юлташ доклачĕнче механизаторсен кадрĕсем пирки сахал каланине кăтартса парать. Хальхи вăхăтра, тет оратор, ялхуçалăхĕнче техника тĕп вăй пулса тăрать. Çак техникăна республикăра начар усă кураççĕ. Механизаторсен кадрĕсене малти вырăн йышăнса тăраççĕ, çавăнпа та вĕсем çине ытларах пăхмалла.

Коротков юлташ: обком руководстви критика çине тĕрĕс мар пăхать, критикăшăн ăна хăйне тавăрма пăхать, тесе шутлать.

Коротков юлташ малалла Сталин ячĕпе тăракан колхозра практикăлла лайăх шкул витĕр тухнă ялхуçалăх новаторĕсем, колхоз производствин çамрăк та пултаруллă организаторĕсем ӳссе çитĕнни çинчен калать. Анчах колхозри 62 коммунистран тăракан парти организацийĕнчен темиçĕн районта ĕçлеме пĕр çынна та илмесçĕ.

Чăваш АССР прокурорĕ **Сидоркин** юлташ кадрсене тĕрĕс мар суйласа илни çинчен калакан нумай тĕслĕхсем илсе кăтартать. Суту-илӳ организацийĕсенче çаратусемпе растратăсем пулнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл — кадрсене вĕсен политикăлла тата ĕçлĕхлĕ пахалăхĕ тĕлĕшпе суйласа илме парти кăтартса панă принципсене сĕмсĕррĕн пăсни пулать. Çак организацисенче кадрсем улшăнса тăни питех те пысăк. Суту-илӳ ĕçне жуликсем, ĕçсе пăсăлнă çынсем, ăнсăртран килсе тухнă çынсем хĕсĕнсе кĕреççĕ. Суту-илӳ предприятийĕсенчи парти организацийĕсем суту-илӳ работникĕсене государствăпа коопераци пурлăхĕ çине коммунистла пăхма, растратăсемпе çаратусене хирĕç кĕрешме воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. КПСС обкомĕн план, финанс тата суту-илӳ пайĕ суту-илӳ предприятийĕсенчи парти организацийĕсен ĕçĕсемпе интересленмест.

Парти райкомĕсем нумайăшĕ кадрсене суйласа илес тĕлĕшпе парти Уставĕ хушнине пурнăçламаççĕ. Сидоркин юлташ Куславкка, Етĕрне, Çĕмĕрле, Первомайски, Элĕк, Советски тата ытти райкомсен суту-илӳ организацийĕсен работникĕсене суйласа илсе воспитани парасси çине тĕрĕс мар пăхнине конкретлă тĕслĕхсем тăрăх кăтартса парать. Çăмахрах, Элĕк райпотребсоюз правленийĕн председателĕ Багров райком куçĕ умĕнчех ĕçе аркантарса пырать, пĕрмай ĕçкĕре çӳрет, аппарата жуликсене кĕртсе тултарнă, растратăсене хирĕç кĕрешмест. Советски райпотребсоюз правленийĕн председателĕ Степанов та хăйне çавăн пекех тытать. Парти райкомĕсем çакăн çине нимĕн пулман пек пăхса тăраççĕ, райпотребсоюза тивĕçлĕ йĕрке тума тăрăшмаççĕ.

Юлашки вăхăтра, Чурачăк, Кувакино, Елчĕк, Сĕнтĕрвăрри райпотребсоюзĕсенче пысăк растратăсем çаратусем тупса палăртнă. Асăннă районсенчи парти райкомĕсем суту-илӳ организацийĕсенче тивĕçлĕ йĕрке туса хуман.

Сидоркин юлташ кадрсене суйласа илес тĕлĕшпе парти обкомĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртать. Обком час-часах ертсе пыракан вырăна ĕçлеме юрăхсăр çынсене уйăрса лартать. Тунă йăнăш çинчен парти обкомĕнче вăл е ку работник ĕçе юхăнтарса çитерсен кăна пĕлеççĕ.

Ку таранччен, тет Сидоркин юлташ, ĕçе юхăнтарса çитернĕ работниксене тивĕçлипе айăплассинчен хăтарса хăвармă тăрăшакан юрăхсăр практикăна пĕтермен. Тĕслĕхрен, парти обкомĕн план, финанс тата суту-илӳ пайĕ Вăрман промышленность министерствин УРС начальникĕ пулнă Ефремов ĕçе юхăнтарса çитернине пĕлсе тăнă. Вăл государствăна пысăк сиен кӳнĕ. Анчах Ефремов республикăран таса çын пулса тухса кайнă.

УРС-ăн çĕнĕ начальникĕ Никандров Чăвашторгра ĕçленĕ чухне растрата тунă, УРС-а куçарнă хыççăн та вăл ĕçе нимĕн чухлĕ те лайăхлатман. УРС-ра растратăсемпе çаратусем халĕ те пулаççĕ. Кадрсем тĕлĕшпе те кунта ĕçсем начар тăраççĕ. Никандров кадрсен пайĕн начальникĕ пулса нумай вăхăт хушши ĕçленĕ çынна ĕçрен кăларнă. Ун вырăнне вăл ĕçе хăйĕн арăмĕн тăванне, судпа айăпланнă çынна илнĕ.

Обком «Чăвашвăрман» трестĕнчи, «Маслопром» трестĕнчи растратăсемпе çаратусене пĕлсе тăрать, анчах та темшĕн вăл çак ĕçсене пăхса тухассине вăраха тăсса пырать.

КПСС обкомĕ çумĕнчи парти работникĕсене хатĕрлекен курс директорĕ **Иванов** юлташ юлашки çулсенче çак курсра 500 ытла парти тата совет работникĕсем вĕренсе хатĕрлени çинчен пĕлтерет. Курсран вĕренсе тухнă работниксем начар мар ĕçлеççĕ.

Иванов юлташ курсра вĕренме илес ĕçри çитменлĕхсем çинчен калать. Курсра вĕренме ответлă вырăнсенче ĕçлеме пултаракан çынсене уйăрса яма тăрăшас пулать. Анчах парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем курсра вĕренме начар работниксене уйăрса яни те пулать-ха.

Парти обкомĕ, тет Иванов юлташ, курсра ялан ĕçлекен преподавательсен кадрсене суйласа илесси çине сахал пăхать. Хула комитечĕсен курсри парти организацийĕн ĕçĕпе ытларах интересленмелле.

Курсра совет работникĕсем нумай вĕренеççĕ. Анчах Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Верховнăй Совет Президиумĕн ертсе пыракан работникĕсем курсри ĕçсемпе интересленмеççĕ.

Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ **Кузьмин** юлташ районти парти организацийĕ юлашки вăхăтра кадрсен йышне лайăхлатни çинчен калать. Анчах парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ кадрсене политикăлла тата ĕçлĕхлĕ пахалăхне сăнаса вĕренес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Работниксен пахалăхĕ çинчен анкетăсем тăрăх тата справкăсем тăрăх кăна пĕлеççĕ. Çавăн пирки те ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме юрăхсăр работниксене уйăрса лартни те пулать.

Хальхи вăхăтра парти райкомĕ колхоз кадрсене çине уйрăмах тимлĕн пăхать. Кая юлса пыракан чылай колхозсене пултаруллă организаторсем уйăрса янă. Вĕсем колхозниксене çак колхозсем кая юлса пынине пĕтерме мобилизацилеççĕ.

КПСС обкомĕн парти, профсоюз тата комсомол органĕсен пайĕн заведующийĕ **Талдыкин** юлташ республикăри парти работникĕсен идейăлла шайĕ тата ĕçлĕхлĕ квалификацийĕ ӳссе пынине кăтартакан фактсем илсе кăтартать. Çакăнпа пĕрлех вăл парти аппаратĕнче ĕçлекен работниксене воспитани парас тата политика енĕпе вĕрентес ĕçе лайăхлатма кирлине палăртать. Чылай райкомсем кадрсен идейăлла-политикăлла шайне ӳстерес çине çителĕксĕр пăхаççĕ. Работниксене канашлăва пухмаççĕ, вĕсене инструктаж памаççĕ. Вĕсем хăйсем пĕлнĕ пек ĕçлесе тăраççĕ.

Хăшпĕр районсенче пуçламăш парторганизацисен секретарĕсемпе ĕçлессине начар йĕркеленĕ. Улатăр райкомĕн секретарĕ Поверенное юлташ кăçал парторганизаци секретарĕсене пĕр лекци те вуласа паман, вĕсем умĕнче доклад та туман. Ытти хăшпĕр райком секретарĕсем те лекцисем доклад тумаççĕ.

Пуçламăш парторганизацисене хула комитечĕсемпе райкомсем çинчен ертсе пымалли паха формăсенчен пĕри вăл — парторганизацисен секретарĕсен отчечĕсене бюро ларăвĕсенче çӳтсе явни пулать. Чылай райкомсем пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен отчечĕсене бюро ларăвĕсене, пленумĕсенче тăтăшах çӳтсе яваççĕ. Анчах та пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен отчечĕсене бюро ларăвĕсенче пленумĕсенче питех те сахал çӳтсе явакан райкомсем те пур-ха.

Облпрофсовет председателĕ **Романова** юлташ профсоюз кадрĕсене суйласа илсе воспитани парасси çинчен калать. Облпрофсоветпа профсоюз обкомĕсем, парти организацийĕсем ертсе пынипе, ку тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем туса ирттереççĕ. Март уйăхĕнче республикăри пур районсенче хуласенче те профсоюзсен фабрикăсенчи тата заводсенчи комитечĕсен председателĕсен семинарĕ пулнă. Çак семинарсене парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен секретарĕсем тата вĕсен пайĕсен заведующийĕсем докладсем туса панă. Çавăн пекех тата профсоюзсен обкомĕсем те семинарсем иртернĕ. Профсоюзсен фабрикăсенчи комитечĕсен канашлăвне тăтăшах иртереççĕ. Профактив валли парти обкомĕн тата политикăна наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн лекторĕсем час-часах лекцисем вуласа параççĕ. Предприятисенчи профкабинетсенче консультацисем пулаççĕ. Профсоюзсен ертсе пыракан работникĕсем пурте парти вĕренĕвне хутшăннă.

Çакăнпа пĕрлех Романова юлташ профсоюз кадрĕсене суйласа илес, ĕçе вырнаçтарса тухас тата воспитани парас ĕçре нумай çитменлĕхсем пуррине палăртать. Облпрофсовет работникĕсем вырăна тухса кадрсемпе сахал çыхăнаççĕ, вырăнти ĕçе начар вĕренеççĕ. Профсоюз кадрĕсене воспитани парас тĕлĕшпе малашне нумай ĕçлемелле пулать.

Партин хăшпĕр райкомĕсемпе хула комитечĕсем пысăк предприятисенчи профсоюз комитечĕсен председателĕсене воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, вĕсене канашлусене пухмаççĕ, инструктаж памаççĕ, вĕсен ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслесе тăраççĕ, вĕсен идейăлла-политикăлла шайне ӳстерме тăрăшмаççĕ.

Профсоюз организацийĕсен авторитетне хăпартмалла, вĕсен предприятисенче учрежденисен пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне, хуçалăха культура строительствинчи пĕлтерĕшне ӳстермелле.

ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ **Иванов** юлташ комсомол кадрĕсен йышĕн пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем туса ирттерни çинчен пĕлтерет. Çакă вăл республикăри нумай комсомол организацийĕсенче комсомол ĕçне лайăхлатма май панă.

Парти организацийĕсем çамрăксене воспитани парас, комсомол организацийĕсен активлăхне тата кĕрешӳ пултарулăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртереççĕ.

Улатăр хулинчи парти организацийĕ комсомол организацийĕсен ĕçне куллен ертсе пырать. Пленумсенче тата хула комитечĕн бюро ларăвĕсенче комсомола ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалли пысăк ыйтусене çӳтсе яваççĕ. Çакă вăл комсомол организацийĕсен ĕçне тата хула комитечĕн ĕçне чылай активлатма пулăшнă.

Комсомола ертсе пырасси çине Канаш хула комитечĕ, Чкаловски райкомĕ тата ыттисем те тимлĕн пăхаççĕ.

Иванов юлташ комсомол кадрĕсем хушшинче ĕçлес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртать.

Партин уйрăм райкомĕсем комсомол организацийĕсене начар ертсе пыраççĕ. Хăйсен пĕтĕм ĕçне ячĕшĕн отчетсем итленипе, пĕтĕмĕшле решенисем йышăннипе ирттерсе яраççĕ. Комсомол кадрĕсене суйласа илесси çине тивĕçлипе пăхманни те палăрать. Пăрачкав районĕнче кутарачченех ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн, Хĕрлĕ Чутай районĕнче иккĕмĕш секретарĕн кандидатурине палăртман. ВЛКСМ Етĕрне райкомĕн секретарĕ ĕçлеме ĕвĕсе пуçлани те нумаях пулмасть-ха, вăл ĕçе хăнăхса çитмен. Анчах парти райкомĕ ăна райçутĕç пайĕн заведующийĕ туса хума сĕнет.

Партин уйрăм райкомĕсем хăйсен ларăвĕсенче комсомол ĕçĕ çинчен ыйтусем сахал пăхса тухаççĕ. Тĕслĕхрен, КПСС Первомайски райкомĕ 1952 çул хушшинче пурĕ те пĕр комсомол организаци секретарĕн отчетне кăна итленĕ. Районти парти организацийĕсем комсомол ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлме тăрăшмаççĕ, комсомол кадрĕсене воспитани парасси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Çавăн пирки те нумай колхозсенчи комсомол организацийĕсем начар ĕçлеççĕ.

КПСС Çĕмĕрле райкомĕ комсомол ĕçне ертсе пырасси çинчен час-часах ыйтусем пăхса тухать, анчах хăй йышăннă решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе сахал ĕçлет.

Парти обкомĕ те, тет Иванов юлташ, ВЛКСМ обкомĕн ĕçне çителĕксĕр ертсе пырать. Парти обкомĕ ВЛКСМ обкомĕн ĕçне ертсе пырасси, пуринчен ытла, решенисем йышăнни пулать.

Красноармейски райкомĕн секретарĕ **Мустакова** юлташ парти обкомĕ кадрсемпе ĕçлесси çине çителĕксĕр пăхни çинчен калать. Парти обкомĕ, тет вăл, кадрсемпе вĕсене ĕçе уйăрса лартнă чухне кăна ĕçлет, кайран вара вĕсем çинчен манса каять.

— Парти райкомĕн секретарĕ пулса эпĕ тăхăр уйăх ĕçлетĕп ĕнтĕ, — тет вăл.— Районта ытти çамрăк работниксем те пур. Пире обком енчен пулăшу кирлĕ. Анчах çак иртнĕ 9 уйăх хушшинче пирĕн районта обком секретарĕсенчен пĕри те пулман. Эпĕ мĕнле ĕçлени çинчен манран обкомăн пĕр секретарĕ те ыйтса курман.

Мустакова юлташ малалла республикăри ертсе пыракан работниксем районта пулнă чухне вырăнта ĕçсем мĕнле тăнипе паллашма, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе пулăшма тăрăшманни çинчен калать.

— Пĕррехинче пирĕн пата Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ Афанасьев юлташ партин XIX-мĕш съезчĕн итогĕсем çинчен доклад тума пычĕ,— тет вăл.— Эпир Афанасьев юлташ пирĕн колхозсенче пулса курасса кĕтнĕччĕ. Анчах вăл пуху пуçланиччен пĕр сехет маларах кăна пырса çитрĕ. Доклад турĕ те колхозсенче пулмасăрах тухса кайрĕ. Обком бюровĕн членĕ çакăн пек тумалла-ши вара?

Ахазов юлташ доклачĕ тăрăх прениre çавăн пекех **Исаев** юлташ (Чăвашпотребсоюз), **Тощев** юлташ (Госплан), **Иванов** юлташ (КПСС Тăвай райкомĕн секретарĕ), **Шувалов** юлташ (Шупашкарти электроаппаратура заводĕ) тухса каланă.

Пленум çӳтсе явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăннă.

СССР Министрĕсен Советĕнче

СССР Министрĕсен Совечĕ ССР Союзĕн Австрири Верховнăй Комиссарĕпе Совет Союзĕн Австрири çарĕсен Главнокомандующийĕн ĕçĕсене малашне те пĕр çын туса пырасси вырăнлă мар тесе йышăннă. Çакна май Главнокомандующие Верховнăй Комиссар ĕçĕсене туса пырассинчен хăтарнă. Главнокомандующин ĕçĕ вăл Совет Союзĕн Австрири çарĕсене ертсе пырасси кăна пулать.

ССР Союзĕн Австрири Верховнăй Комиссарĕ пулма И. И. Ильичев посола уйăрса лартнă.

Хатĕрлев ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелле

Хĕрлĕ Чутай районĕ государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе юлса пыракан районсенчен пĕри шутланать. Вăл темиçе çул хушши ĕнтĕ аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм, тир хатĕрлемелли плансене тултараймасть, государство умĕнче пысăк парăма кĕрсе пырать. Район 1952 çулта та аш-какай памалли плана пĕтĕмпе те 82 процент çеç тултарнă, çăмарта тата çăм памалли заданисене нумай пурнăçлайман.

Хатĕрлев ĕçĕнче кăçал та улшăнусем çук. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне сĕт-çу хатĕрлемелли плана 17,6 процент кăна, аш-какай хатĕрлемелли плана 30 процент, çăмарта хатĕрлемелли плана 48 процент кăна тултарнă. Район çăм хатĕрлесе парас тĕлĕшпе те питĕ юлса пырать.

Хатĕрлев ĕçĕнче улшăну тума района мĕнле сăлтавсем чăрмантараççĕ-ха? Чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ, райуполминзаг тата хатĕрлев организацийĕсем — Маслопром, райпотребсоюз, Заготскот тата Заготживсырье ответлăха туймасăр ĕçлени пулать. Вĕсем çак ответлă ĕçе кирлĕ пек тимлĕн ертсе пымаççĕ. Хатĕрлев организацийĕсем государство дисциплинине пурнăçлама мерăсем йышăнмаççĕ, парăма кĕнĕ çынсемпе сахал ĕçлеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ кăçал колхозсенчен нумайăшĕ аш-какай обязательстви енĕпе государство кăтартса панă срокесене пăсаççĕ, сĕт-çу тата çăмарта памалли обязательствăна вара халĕ пĕр колхоз та вăхăтра пурнăçласа пымасть-ха. Колхозниксен хуçалăхĕсенчен 66 проценчĕ кăçал пĕр килограмм та аш-какай паман, çăмарта хатĕрлессипе те юлса пыраççĕ.

Ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлекен работниксем государство дисциплинине хăйсем те çирĕп пурнăçламаççĕ. Сăмахран, ял Совет председателĕсенчен çурри ытла аш-какай пама тытăнман. Вĕсем хушшинче сĕт-çу тата çăмарта пама пуçламаннисем те нумай. Питĕркасси ял Совет председателĕ С. Фондеркин юлташ сĕт парас тĕлĕшпе 367 литр парăма кĕнĕ. Пантьăк ял Совет председателĕ Г. Петров юлташ икĕ çул çурăшăн ĕнтĕ çăмарта, Мăн Хăмаркка ял Совет председателĕ М. Сандомиров юлташ çулталăк çурăшăн аш-какай памасăр пурăнаççĕ. Ответлă работниксене ырă ят паман çакăн пек тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем обязательнăй йĕркепе памалли закона пăснă фактсемпе райисполком тата хатĕрлев организацийĕсем килĕшсе лараççĕ. Уполминзагăн нумай агенчĕсем япăх ĕçлеççĕ. А. Скворцов, А. Яковлев, С. Черноносов, С. Аркадьев, Я. Сидоров агентсем апрельте аш-какай пĕр килограмм та хатĕрлемен. Агентсенчен ытларахăшĕ хăйсем те парăмлă. Çавăн пек чухне вĕсем халăх хушшинче ăçтан-ха ăнăçлăн ĕçлеме пултарччăр?! Хатĕрлев министерствин районти уполномоченнăйĕ Максимов юлташ çитменлĕхсене пĕтерме çине тăрса тăрăшмасть.

Хатĕрлев организацийĕсем пурнăçран юлса пыраççĕ, вĕсем çаврăнăçусăр ĕçлеççĕ. Халĕ çăмарта хатĕрлемелли чи лайăх вăхăт. Райпотребсоюз вара килĕрен çăмарта пухма çак таранччен 20 çын тупса çитермен. Турхан ялповĕ ĕçлекен территорине 19 ял кĕрет. Кунта çăмарта пухакансем пĕтĕмпе те 7 çын çеç, вĕсен ĕçне те йĕркелесе пыракан çук, мĕншĕн тесен ялпо председателĕн хатĕрлев енĕпе ĕçлекен заместительне базăна çăмарта леçтереççĕ.

Сĕт хатĕрлекенсен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Вĕсенчен нумайăшĕ халĕ те хăймаран уйăрман сĕте йышăнмаççĕ. Уйпуçри сепаратор пункчĕ çавăн пек сĕте 4 уйăх хушши илмесĕр тăнă, мĕншĕн тесен сепаратор пулман, ăна вăхăтра тупма та тăрăшман. Вутă çителĕксĕр пирки сепаратор пункчĕсем халĕ те пĕр тикĕс ĕçлеймеççĕ.

Районти колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕхе самăртмасăр параççĕ. Ку ĕнтĕ обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сиен кӳрет. Пĕлтĕр ырхан выльăхсем 72 процент панă. Ку вăл 440 центнер аш-какай çухатнипе пĕртанах. Хатĕрлев пункчĕсене самăртнă выльăх парас ĕçе кăçалхи пĕрремĕш кварталта иртнĕ çулхинчен те начартарах йĕркеленĕ пулнă. Çакăншăн пуринчен ытла районти ялхуçалăх пайĕ тата колхоз председателĕсем ответлă. Анчах вĕсем государствăна выльăхсене самăртса памалла тăвас, çавна май колхозсене усă кӳрес ыйтупа ытла та сахал интересленеççĕ.

Аш-какай обязательстви шучĕпе сыспасем питĕ сахал параççĕ. Сысна ашĕ кăçал, çулталăкри планпа танлаштарсан, пĕтĕмпе те 17 процент çеç хатĕрленĕ. Кун пек туни ĕне выльăх ĕрчетмелли плана тултарма хытă чăрмантарма пултарать.

Районта выльăх-чĕрлĕхе, сĕт-çăва, çăмартана салатса пĕтернине хирĕç татăклăн кĕрешмеççĕ, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене çирĕп шута илсе пымаççĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырасси—кашни колхозăн, кашни ĕççыннин пĕрремĕш тивĕçĕ. Тăван çĕршыва выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем вăхăтра парса тăни халăх пурнăçне тăтăшах лайăхлатса пыма, çăмăл промышленноçа аталантарма кирлĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи руководительсен, çавна асра тытса, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре татăклă улшăну тумалла, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарассишĕн пыракан социализмла ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешмелле.

Н. ШАШУРИН.

Почтальона лайăх ĕçлеттермелле

Совет Союзĕнче пурăнакан халăх хамăр Тăван çĕршыври чаплă стройкăсенчи, фабрикăсемпе заводсенчи тата ялхуçалăхри çитĕнӳсем çинчен яланах пĕлсе тăрасшăн. Вăл урăх çĕршывсенчи лару-тăрусем çинчен те тĕплĕ, лайăх пĕлесшĕн. Çавăнпа пирĕн халăх куллен-кун хаçатсем, журналсем вулать. Çавăнпа эпĕ те хам валли виçĕ хаçат: «Коммунизм ялавĕ», «Çамрăк коммунист», «Социализмлă ĕç» çырăнса илетĕп. Çав хаçатсене вуласа эпĕ Тăван çĕршыври ĕçсемпе, çитĕнӳсемпе яланах паллашса пырасшăн.

Анчах мана чăрмантаракансем пур. Пирĕн Сталин ячĕпе тăракан колхозра почтальон пулма Ирина Кузьмина юлташа уйăрнă. Анчах ку ĕçе вăл питĕ япăх тăвать. Темиçе кун хушши хаçатсем илсе килмест, вара пĕр-пĕр кун купипе 7—8 номер илсе пырса парать. Пирĕн пурнăçра тĕрлĕ улшăнусем хăвăрт пулса пыраççĕ, çавăнпа маларах тухнă хаçатри материалсем кивелсе çитеççĕ, вĕсене вулама интереслĕ те мар. Хăшпĕр номерсем çухалаççĕ, ман пата çитеймеççĕ.

Г. ПАВЛОВ.

Çĕмĕрле районĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Çĕрпӳ районĕнчи Заготконтора складĕнче çăмарта илнĕ чухне тĕрлĕ йĕркесĕрлĕхсем пулни çинчен çыру килнĕччĕ. Çырăва Чăвашпотребсоюзăн заготовка управленине янă.

Чăвашпотребсоюз Çĕрпӳри потребсоюз правленийĕ çырура кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни тата Чăвашпотребсоюзăн правленийĕ хăйĕн пулас ларăвĕнче Çĕрпӳ районĕнчи потребсоюз ĕçĕсем çинчен сӳтсе явмалли çинчен пĕлтерчĕ.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине «Халăхшăн тăрăшмаççĕ» ятлă çыру килнĕччĕ. Ăна тĕрĕслеме Çĕрпӳ райисполкомне янăччĕ.

Çĕрпӳ райисполкомĕ çырура кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерни, пекарня заведующине Максимова ĕçрен кăларни тата халĕ пекарня лайăхрах ĕçлеме тытăнни çинчен пĕлтерчĕ.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Етĕрне районĕнчи «Ленинский завет» колхозри почтальон Комаров йĕркеллĕ ĕçлеменни çинчен çыру килнĕччĕ. Редакци çырăва Етĕрнери сыхăну кантурне тĕрĕслеме янăччĕ.

Етĕрне районĕнчи сыхăну кантурĕ колхоз правленинчен Комаров вырăнне тепĕр çынна ĕçлеттерме ыйтнă тесе пĕлтерчĕ.

* * *

Вăрнар районĕнчи Уравăш ялповĕнчи çитменлĕхсем çинчен çырнă çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ ĕççынни депутачĕсен Вăрнар район Совет исполкомĕн суту-илӳ пайне çырура асăннисене тĕрĕслеме тата тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Исполкомăн суту-илӳ пайĕ çырура çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ. Уравăш ялпо магазинĕн продавецне Ластухина тата ялпо правлени председателĕн заместительне Осипова ĕç вăхăтĕнче ĕçнĕшĕн тата суту-илӳ йĕркине пăснăшăн ятланă, склад заведующине Николаева — хытă ятланă. Вĕсене пурне те малашне йĕркесĕр ĕçлени палăрсан çирĕп ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарнă.

Халăх сучĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви социализмла законлăха тĕреклетессине пысăка хурса хаклаççĕ. Ку задачăна пурнăçлама халăх сучĕсен ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пымалла.

Суд пирĕн государствăн чи кирлĕ органĕсенчен пĕри пулса тăрать, вăл социализмла харпăрлăха тĕреклетес, граждансен прависене хӳтĕлес, çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене пĕтерес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнать. Çакă вăл совет сучĕпе судьясем умне пысăк требованисем кăларса тăрататъ.

Халăх сучĕ—Совет Союзĕнчи суд системинчи тĕп сыпăк. Уголовнăй тата граждански ĕçсенчен нумайăшне халăх сучĕсем пăхса тухаççĕ. Судьяча халăх хăй суйлать. Пирĕн ĕççыннисем совет судне шанаççĕ тата ĕненеççĕ, ăна хисеплеççĕ. Совет сучĕ тĕрĕслĕхе çӳлте тытакан, халăх интересĕсене хӳтĕлекен орган пулса тăрать.

1951 çулхи декабрь уйăхĕнче пулнă суйлавсенче суйлавçăсем халăх сучĕ умне нумай требованисемпе наказсем кăларса тăратрĕç. Вăл требованисемпе наказсем халăх сучĕн ĕçне лайăхлатма пулăшаççĕ. Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласси кашни халăх судьипе халăх заседателĕн хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать.

Суйлавсем хыççăн иртнĕ вăхăтра халăх сучĕсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Нумай халăх сучĕсем уголовнăй тата граждански ĕçсене тĕплĕ пăхса тухаççĕ. Вĕсен шутне, сăмахран, Елчĕк районĕнчи халăх судьине Галямов юлташа кĕртме пулать. Вăл 15 çул хушши ĕнтĕ халăх судьи пулса ĕçлет, хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пырать.

Шупашкарти 5-мĕш участокри халăх судьине Достовалов юлташа судья пулма малтанхи хут суйланă. Çамрăк судья ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Кассировпа Угодин судьясем те лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах судсемпе юстици органĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пирĕн государство çав çитменлĕхсемпе килĕшме пултараймасть.

Хăшпĕр судьясем ĕçсене пăхса тухнă чухне закона пăсаççĕ, ĕçе çиелтен пăхса тухнине пула йăнăшсем тăваççĕ. Сăмахран, Куславкка районĕнчи 1-мĕш участокри халăх судьи Дмитриев юлташ социализмла харпăрлăха çаратакансен тата спекулянтсен ĕçĕсене пăхса тухнă чухне закона пăснă, вĕсем тĕлĕшпе çемçе мерăсем йышăннă. Вăрмар районĕнчи 2-мĕш участокри халăх судьи Степанов та социализмла харпăрлăха çаратакансемпе хулигансене хирĕç кĕрешес ĕçе вăйсăрлатнă. Закона çакăн пек пăсни сиен кӳрет. Суд ĕçĕнчи çавнашкал йăнăшсене хирĕç татăклăн кĕрешмелле.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1947 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче кăларнă Указĕ государство пурлăхне тата обществăлла пурлăха çаратакансене пĕр хĕрхенмесĕр айăплама хушать. Çак Указа çирĕппĕн пурнăça кĕртсе пырасси Совет сучĕн тĕп обязанноçĕ пулса тăрать.

Суд органĕсен ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсакансене хирĕç те татăклăн кĕрешмелле.

Ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснине пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ пулин те, ку тĕлĕшпе çитменлĕхсем те тĕл пулаççĕ-ха. Куславкка районĕнчи 2-мĕш участокри тата Элĕк районĕнчи халăх сучĕсем ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсакансемпе килĕшсе лараççĕ, колхоза сиен кӳрекенсенчен шыраса илес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Çакăн пек çитменлĕхе тахçанах пĕтерме вăхăт ĕнтĕ.

Ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсакансен ĕçĕсем, тенĕ Маленков юлташ КПСС XIX-мĕш съездĕнче, колхоза хирĕç, государствăна хирĕç тунă ĕçсем пулса тăраççĕ, колхоз хресченĕсене пысăк сиен кӳреççĕ. Маленков юлташ ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснине пĕтерме кирли çинчен, колхоз пурлăхне çаратакансене социализмла государствăн законĕсем тăрăх колхоз стройĕн тăшманĕсем вырăнне хурса тивĕçлипе айăплама кирли çинчен каланă.

Сталинла Конституци совет гражданĕсене аслă правăсем панă. Совет сучĕ çак правăсене çирĕппĕн хӳтĕлет. СССР Конституцийĕн 127-мĕш статьинче çапла каланă: «ССР Союзĕн гражданĕсен никам тĕкĕнмелле мар право пур. Суд постановленийĕсĕр е прокурор ирĕк памасăр, никама та арестлеме пултараймаççĕ».

Халăх сучĕсен преступниксене çирĕп ответ тыттарнипе пĕрлех çакăн çинчен те манмалла мар: айăпсăр çынна суд умне тăратни тата ăна уголовнăй йĕркепе ответ тыттарни ан пултăр.

Халăх сучĕн ĕçĕсем çинчен суйлавçăсем умĕнче тăтăшах отчетлă докладсем туса парасси халăх судьин тивĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Совет суйлавçисем халăх сучĕсен ĕçĕпе хытă интересленеççĕ. Вĕсем суд ĕçĕ çинчен час-часах отчетсем туса пама, ĕççыннисене законсене ăнлантарса пама ыйтаççĕ. Суйлавçăсем суд ĕçне тĕплĕн тишкĕреççĕ, паха сĕнӳсем параççĕ.

Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршă ял Советĕнчи суйлавçăсем халăх судьин отчечĕ хыççăн тухса каланă чухне суда пыма хушакан повесткăсене вăхăтра пама кирлине, ачасене пăхса усрама укçа-тенкĕ хăвăртрах шыраса илмелле тумаллине, ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç татăклăн кĕрешме кирлине асăрхаттарнă. В. Падюков суйлавçă халăх сучĕн колхоз Уставне пăсакансене хирĕç кĕрешессине тĕп вырăна хумалли çинчен каланă.

Первомайски районĕнчи 1-мĕш участокри халăх судьин отчетлă доклачĕ хыççăн суйлавçăсем çакăн пек сĕнӳ панă: халăх судьин отчетлă доклачĕсене вăхăтра иртермелле, ĕççыннисене законсем çинчен ăнлантарса памалла, граждансен жалобисемпе ыйтăвĕсем çине тимлĕн пăхмалла.

Халăх судьисем ĕççыннисем умĕнче отчетсем туса пани совет сучĕ чăн-чăн демократиллĕ суд пулса тăни çинчен калать. Отчетлă докладсем судьяшăн пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсем ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Халăх судьисенчен нумайăшĕ отчетлă докладсене йĕркеллĕ иртереççĕ. Анчах хăшпĕр судьясем çак ĕç çине çиелтен пăхаççĕ-ха. Красноармейски районĕнчи халăх судьи Андреев, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи 2-мĕш участокри халăх судьи Васильев, Улатăр районĕнчи 2-мĕш участокри халăх судьи Фролов юлташсем юлашки икĕ квартал хушшинче ĕççыннисем умĕнче пĕр отчетлă доклад та туса паман. Çĕмĕрле районĕнчи 2-мĕш участокри халăх судьи Григорьев, Пăрачкав районĕнчи 1-мĕш участокри халăх судьи Танькин, Куславкка районĕнчи 1-мĕш участокри халăх судьи Дмитриев массăсемпе тачă çыхăнса ĕçлемеççĕ. Ку судьясем хăйсен политикăлла шайне тата ĕçри квалификацине ӳстерсе пыма тăрăшмаççĕ. Çавăнпа та вĕсен ĕçĕсем ытти халăх сучĕсен ĕçĕсенчен чылай япăхрах пулнинчен тĕлĕнмелли çук.

Хăшпĕр халăх сучĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем Чăваш АССР Юстици министерстви халăх сучĕсен ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслесе тăнинчен тата вăхăтра тивĕçлĕ пулăшу паманнинчен килнĕ.

Халăх сучĕ айăплакан орган кăна мар, çавăн пекех ĕççыннисене воспитани паракан орган пулса тăрать. Халăх сучĕ ĕççыннисене социализмла законлăха çирĕппĕн пурнăçласа пыма, социализмла харпăрлăха сыхлама, государство дисциплинине, ĕç дисциплинине пăхăнса тăма воспитани памалла.

Пирĕн çĕршывра граждансен ăнлануллăхĕ çултан-çул ӳсет, миллионшар совет çыннисем социализмла государствăн законĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыраççĕ. Преступлени тăвакансен хисепĕ чаксах пырать. СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1953 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче «Амнисти çинчен» Указ кăларчĕ. Çак Указ тăрăх государствăшăн хăрушă преступлени туман, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе обществăн усăллă членĕсем пулма пултаракан çынсене ирĕке кăларнă.

Социализмла законлăха малалла тĕреклетсе пырасси, çав ĕçри çитменлĕхсене татăклăн пĕтересси совет сучĕпе юстици работникĕн пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать.

Совет сучĕпе юстици работникĕсем халăх сучĕсен ĕçне лайăхлатас шутпа мĕн тума пултарнине йăлтах тăвĕç.

Социализмла законлăха çирĕппĕн пурнăçласа пыни, совет гражданĕсен прависене хӳтĕлени—Совет государствин вăйхăватне малалла тĕреклетмелли, пирĕн çĕршывра ăнăçлăн коммунизм тумалли кирлĕ условисенчен пĕри.

М. АЛЕКСЕЕВ,
Чăваш АССР Юстици министрĕ.

Вут-кăвартан сыхланар

Пирĕн районти «Çĕнĕ Юнга» колхозра вут-кăвартан сыхланма кирлине нихçан та манмаççĕ. Кунта çĕнĕ депо туса пĕтерчĕç. Унта яланах дежурнăйсем тăраççĕ. Пушарпа кĕрешмелли хатĕрсем (насус, пичкесем, багорсем, витресем, ломсем) юсавлă тата çителĕклĕ. Вут-кăвартан сыхланас ĕçе «Прожектор», Сталин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те лайăх йĕркеленĕ.

Çапах та ку ĕçе пур çĕрте те тивĕçлипе организацилемен-ха. Сăмахран, «Гигант» колхозри (председателĕ Ф. Юхтанова юлташ) пушар сарайĕнче колхозниксем дежурствăра тăрассине йĕркелемен, лашасем те уйăрса паман.

Пушартан сыхланас ĕçе организацилеме пирĕн совет государстви Госстрах урлă каялла илмелле мар ссудăсем парать. «Коммунизм» колхоза пушар депоне юсама, «Колос» колхоза пĕве пĕвелеме укçа уйăрса панă. Анчах ку колхозсен председателĕсем И. Смеловпа И. Иванщиков юлташсем çак пысăк пулăшупа усă курасшăн мар. Вĕсем кирлĕ материалсене паян кунччченех хатĕрлемен.

Вут-кăвартан сыхланас ĕçе лайăхлатас тесе, ялсенче пур çĕрте те ирĕклĕ пушар дружинисем организацилемелле. Пушартан сыхланмалли депосемпе сарайсенче ялан дежурнăйсем тăрассине йĕркелемелле. Вут-кăварпа кĕрешмелли хатĕрсем юсавлă тата çителĕклĕ пулни кирлĕ. Çак ĕçсене тăвасси—кашни ял Совечĕн, кашни колхоз правленийĕн тивĕçĕ.

Вут-кăвартан сыхланас ĕçе лайăхлатар. Кашни колхозра ялан ĕçлекен пушар дружини пултăр.

М. ИСАЕВ,
Сĕнтĕр районĕнчи пушартан сыхланас енĕпе ĕçлекен инспектор.

Вырăс халăхĕн мухтавне кăтартакан япаласем

Государство истори музейĕн залĕсенче

Государствăн Мускаври истори музейне уçнăранпа ĕнер—июнĕн 8-мĕшĕнче 70 çул тултарчĕ. Çак музей çĕршыври паллă наука учрежденийĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ун çинчен миллионшар совет çыннисем пĕлеççĕ.

Государство истори музейне халăх кăмăлланине çакă та лайăх кăтартса парать: иртнĕ çулта кăна кунта пĕр миллион та çĕр пин çын ытла пырса курнă. Пысăк çутă залсенче (вĕсем 40 ытла) кулленех—ирген пуçласа каçчен çынсем нумай пулаççĕ.

Музейăн пуянлăхĕ шутсăр пысăк. Археологи пайĕсенче палеолит, неолит тата бронза эпохисенчи экспонатсене, авалхи çынсем пурăннă вырăнсенчен совет археологĕсем чавса кăларнă нумай материалсене курма пулать.

Музейра сайра тĕл пулакан авалхи алçырăвĕсен, тахçанах пичетлесе кăларнă кĕнекесен тата документсен пуххи усранать. Вăл—пирĕн çĕршывăн иртнĕ вăхăтри культурăллă пуянлăхĕ. Кунтах укçасен пысăк коллекцине пухнă. Унта вырăссен авалхи укçисене те, Греци, Рим, Византи, сасанидсен, араб халифачĕн, Инди, Китай, Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен, Америка укçисем те пур. Фарфортан, фаянсран тата майоликăран тунă япаласен коллекцийĕсем те пысăк, тĕрлĕ хĕçпăшал сахал мар—тахçан эвалхи ухăсенчен, пищальсенчен тата фитильпе персен мушкетсенчен пуçласа хальхи карабинсем тата газпа аварланакан пăшалсем таранах пур.

Музейра изобретательнăй искусствăна кăтартса паракан япаласем—авалхи вырăссен живопись произведенийĕсем, акварельсем, рисунoксем, гравюрăсем, литографисем, миниатюрăсем сыхланса усранаççĕ. Çав материалсенчен уйрăмах Федор Иванович патшана кăтартса паракан вырăссен пирвайхи светски (тĕнпе çыхăнман) портречĕ, хресченсен вăрçине ертсе пынă Емельян Пугачев портречĕ (ăна паллă мар художник II-мĕш Екатерина императрицăн сăнĕ çине тунă), вырăссен аслă художникĕсем Тропинин, Серов, Верещагин ӳкернĕ картинăсем уйрăмах интереслĕ.

Курма пынă çынсем залран зала кĕрсе тухаççĕ. Вĕсем кунта çĕршер пинçуллăхсем çинчен çырнă кĕнеке вуланă пек туяççĕ. Этем обществи аталанма тытăннă чи авалхи тапхăртан—ледниксем пулса каяччен аялти палеолит тата ледниксем пуçланнă чухнехи палеолит эпохисенчен тытăнса (вĕсем 350—120 пин çула яхăн ĕлĕк пулнă), Российăра иртнĕ ĕмĕрхи 70—80-мĕш çулсенче рабочисен революциллĕ юхăмĕ çĕкленме тытăннă вăхăт таран кăтартса параççĕ музейри япаласем. Вырăс государстви аталанăвĕн мĕнпур тапхăрĕсемпе, ĕмĕрхи вырăс çĕрĕсене туртса илме, вĕсен халăхне чуралантарма хăтланнă ют çĕршыв захватчикĕсене хирĕç вырăс халăхĕ кĕрешнипе куракансем йĕркипе паллашаççĕ. Агрессорсем Русь çине хĕвеланăçĕнчен те, хĕвелтухăçĕнчен те килсе тăнă, анчах кунта вĕсене яланах арката-арката тăкнă.

Вырăс халăхĕн мухтавне кăтартакан япаласем музейра питĕ нумай. Вырăс хĕçпăшалĕн нихçан тĕксĕлми мухтавне куратăн, унăн пуян культурине — искусствăна, литературăна, наукăна курса савăнатăн. Вĕсене пирĕн çĕршыври халăхсем крепостничествăпа капитализм пусмăрĕ алхаснă вăхăтра туса аталантарнă.

Чаплă экспонатсем вырăссен государство йĕрки мĕнле ӳссе пынине, XVI-мĕш ĕмĕрте тулашри дипломати тата суту-илӳ çыхăнăвĕсем аталаннине кăтартса параççĕ.

Мускав, тесе çырнă Сталин юлташ столица 800 çул тултарнă ятпа саламласа, «...таткаланса пĕтнĕ Руçа... пĕр государство туса пĕрлештермелли никĕс пулса тăнă».

Çав пĕрлешĕвĕн тапхăрĕсем, вырăс экономикипе культури ӳссе пыни музейри материалсенчен те аван палăрса тăраççĕ. Акă, XVI-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи Мускав Кремлĕн макечĕ. Вăл ун чухнехи тапхăрти вырăс зодчествин архитектура памятникĕсене, хулана мĕнле планланине лайăх кăтартса парать. Экспонатсенчен вырăс культури XVI-мĕш ĕмĕрте çӳлĕ шайра тăни курăнать. Çав вăхăтри нацилле архитектурăн памятникĕсем халĕ те пур-ха. Вĕсем—1555—1560 çулсенче тунă Василий Блаженный храмĕ тата Коломенск ялĕнчи Вознесени чиркĕвĕ т. ыт. те. Стена çинче пысăк гравюра çакăнса тăрать, вăл—Мускавăн 1714 çулхи панорами. Ку документ вырăс столици ун чухнех пысăк хула пулса тăнине кăтартать.

I-мĕш Петр çĕнĕ йĕркесем тунă вăхăта кăтартакан материалсем питĕ интереслĕ. Курма килнĕ çын кунта хамăр çĕршыв промышленноçĕн аталанăвĕпе паллашать. Чылай материалсем çав тапхăрта Уралта тунă Невьянск завочĕ çинчен, каснан Екатеринбургри (халĕ Свердловск) металлурги завочĕ çинчен, унпа пĕр вăхăтрах—1721 çулта тума тытăннă Ярославски Пысăк мануфактура çинчен каласа кăтартаççĕ. Кунтах гимертăмăр шăратас ĕçĕн ăсталăхне кăтартакан япаласем, кĕленче промышленноçĕн тĕрлĕ япалисем пур. I-мĕш Петр вăхăтĕнчи иконографине тата унпа пĕрле ĕçленĕ çынсене, çавăн пекех унăн хăйĕн япалисене, анлăн кăтартса панă. Сăмахран, Архангельск хулине кайса килнĕ чухне тăхăнса çӳренĕ сăхмана, кӳмене, пĕр поход вăхăтĕнче Петр хăйпе пĕрле илсе çӳренĕ пичетлемелли станока куратăн.

Вырăссен çамрăк çар флотне ун чухнехи карабсен макечĕсем кăтартса параççĕ. Унăн малтанхи мухтавлă çĕнтерĕвĕсемпе паллаштаракан гравюрăсемпе тинĕс çинчи паллă çапăçусен схемисем куç умне тухса тăраççĕ. Курма пынă çын вырăс флочĕ шведсен флотне Гангут мысĕ патĕнче (1714) тата Гренгам утравĕ патĕнче (1720) çапса аркатнипе паллашать. Вырăс çар искусстви историйĕн мухтавлă страницисенчен пĕри пулса тăракан Полтава патĕнчи çапăçу çинчен те экспонатсем чылай. Вĕсем хушшинче—12-мĕш Карл вензелĕпе тунă шведсен штандарчĕ, ют çĕрсене туртса илме хапсăннă Карлăн пăшалĕ.

Вырăс халăхĕн никам çĕнтереймин вăйне Суворовăн чаплă похочĕсем, 1812 çулхи Отечественнăй вăрçă тата 1853—1856 çулсенчи вăрçăра Севастополе хӳтĕлени çинчен пухнă нумай материалсем уçăмлăн кăтартса параççĕ. Вĕсем патриотла кăмăл-туйăма мăнаçлăн çĕклеççĕ.

Ăста тунă картта çинче—Альпы сăрчĕсем. Вĕсем урлă хĕрлĕ йĕр выртать, вăл пĕрре аналла тарăн çырмана анать, тепре тăвалла ту хырçисем патне хăпарса каять. Çав çула Суворовăн тĕлĕнмелле паттăр салтакĕсем утса тухнă. Ку вăл вырăс хĕçпăшалĕн ĕмĕр манми мухтавĕ пулса тăрать.

1812 çулхи вăрçă çинчен тунă экспозицире Смоленска хӳтĕленине, Бородино патĕнчи çапăçăва, Наполеон çарне пĕтĕмпех арккатса тăкнине кăтартнă. Кунта туртса илнĕ нумай документсемсĕр, хĕçпăшалсемсĕр пуçне захватчиксем пăрахса хăварнă интереслĕ трофейăсем пур. Вĕсем хушшинче — Наполеон походсем вăхăтĕнче илсе çӳренĕ кровать, вăл тарнă чухне пăрахса хăварнă çуна, Даву маршалăн жезлĕ, Франци çарĕн ялавĕсем.

Севастополе хӳтĕленине кăтартакан залра çав историлле событие хăйсем курнă художниксен сайра тĕл пулакан ĕçĕсем сахал мар. Кунта паха япаласене—бастионсенчен янă донесенисене, вырăс медалĕсемпе орденĕсене, йĕтресемпе картеч татăкĕсене, вилмеллех амантнă вăхăтра В. А. Корнилов адмирал çинче пулнă шинеле куратăн.

Экспозицисене курса, çынсем аслă вырăс халăхĕн науки, техники, литератури, искусстви хăвăрт аталаннипе паллашаççĕ. XVIII-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш пайĕпе паллаштаракан экспозицире вырăссен гениллĕ механикĕ И. И. Ползунов шухăшласа кăларнă пирвайхи пăс машинин макечĕ, К. Д. Фроловăн çĕр айĕнчи гидросиловой установкин чертежĕ, талантлă вырăс мастерĕсем тунă геодези тата навигаци приборĕсем пур. Музейра вырăссен паллă писателĕсен—Херасковăн, Сумароковăн, Державинăн, Карамзинăн, Фонвизинăн, Новиковăн тата ыттисен пурнăçĕпе творчествине кăтартса паракан питĕ паха материалсем нумай. XIX-мĕш ĕмĕрĕн пĕрремĕш çур пайĕнче Пушкин, Лермонтов, Гоголь, Грибоедов, Крылов ячĕсем çап-çутă çăлтăрсем пек çиçме пуçланă. Вырăс литературин çав генийĕсемпе портретсем, сайра тĕл пулакан кĕнекесем, чăн документсем паллаштараççĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çур пайĕнче Л. Н. Толстой, А. Н. Островский, Гончаров, Некрасов, Чернышевский, Салтыков-Щедрин ячĕсем хăватлăн янăраса тăраççĕ. Вырăссен нацилле музыки, сăнласа кăтартакан искусство, театр вăйлăн аталанса пынă.

Вырăс науки аталанса пынине музейра аслă Ломоносовран пуçласа вырăс тата тĕнче наукин корифейĕсен—Менделеевпа Столетов, Сеченовпа Павлов, Бутлеровпа Тимирязев, Лобачевскипе Ковалевская, Лодыгинпа Яблочков т. ыт. те кăтартса панă.

«Историлле наука... пуринчен малтан, материальнăй ырлăхсене тăвакансен историйĕ, ĕççынни массисен историйĕ, халăхсен историйĕ тĕлĕшпе ĕçлемелле». Сталин юлташ çавăн пек гениллĕ калани музей экспозицийĕн тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Музея пыракансем реформа умĕнхи Российăри хресченсен йăлипе тата пурнăçĕпе паллашаççĕ. Вĕсем хресченсем сийленсе пынине, рабочи класс çуралса тĕрекленсе пынине, вăл пусмăрлакансене хирĕç кĕрешме йышăннине кураççĕ. Пуян экспозицисем халăх восстанийĕсене, Степан Разин тата Емельян Пугачев ертсе пынă хресчен вăрçисене кăтартаççĕ.

Паха материалсем ирĕклĕх юхăмĕ Российăра аталанса ӳссе пынине çирĕплетсе параççĕ. Вĕсем хушшинче — вырăссен паттăр революционерăн Радищевăн пурнăçĕпе кĕрешĕвне, декабристсен 1825 çулта пулса иртнĕ восстанине кăтартакан материалсем. Документсенчен тата сайра тĕл пулакан изданисенчен революциллĕ демократсен — Герценпа Чернышевский, Белинскипе Добролюбов тата Некрасов ĕçĕсене курма пулать.

Российăра капитализм аталаннă май рабочисене эксплуатацилени вăйланса пынă. Музейăн юлашки экспозицийĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 70—80-мĕш çулĕсемпе паллаштарать. Кунти нумай документсем тата фотоиллюстрацисем рабочи класăн кĕрешĕвĕ çинчен, Российăра марксизм сарăлса пыма пуçлани çинчен каласа кăтартаççĕ. Музее пынă çын кунта «Северный союз русских рабочих» руководителĕсен — Халтурин столярпа Обнорский слесарь портречĕсене, Петр Алексеев портретне тата ыттисен портречĕсене те курать. Акă пысăк картина. Ку вăл Петр Алексеев судра патша судьисене хаярран питлесе çакăн пек пророкла сăмахсем каланă саманта кăтартса паракан картина: «Миллионшар рабочисен ĕçре пиçĕхсе тĕрекленнĕ аллисем çĕкленĕç те, вара салтаксен штыкĕсем сыхласа тăракан деспотизм пусмăрĕ пĕтĕмпех сирпĕнсе кайĕ!»

Государствăн истори музейĕнче пулнă хыççăн кашни совет çынни хамăр Тăван çĕршывшăн, хамăр халăхшăн тата та ытларах хавхаланса мăнаçланать. Ĕлĕкавалах вырăс çĕршывĕн чысĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварассишĕн, унăн пуянлăхĕпе пĕтĕм тĕнчери мухтавне тата халăх телейне ӳстерессишĕн кĕрешнĕ çынсен ячĕсене совет çыннисем ырă кăмăлпа асăнса пурăнаççĕ.

К. МИХАЙЛОВ.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕнче

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхи зарура Андреа Андреен докладĕ тăрăх пренисем малалла пынă.

Португали представительницин Мария Ламас Португалири хĕрарăмсем йывăр пурнăçĕ синчен каласа панă.

Джанет Джаган Британи Гвианинчи хĕрарăмсен пурнăçĕ синчен, вĕсем пуçăнăç хирĕç кĕрешни синчен каласа кăтартнă. Британи Гвианинче хĕрарăмсем синчен тăракан ыйту мĕнпур колониесенчи хĕрарăмсене хумхантаракан ыйту пулса тăрать, тенĕ вăл. Сак ыйтусем вĕсем—чухăнлăх, ĕçĕмлĕх, пурнăç йывăрлăхри чухăнлăк ыйтусем.

«Тĕнчери тĕрлĕ организацисен, — теме Джанет Джаган, — колониесенчи хăйхисен ыйтăвĕсем çине итлăрах пăхмалла. Ирĕке ортсе пыни тата пуçăлăнă пирăн. Ирĕке халăх сăмăн пек тăвасăлăх тăрăшатъ: хĕрарăмсем пурте пĕр тан пулччăр, Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсенчи хĕрарăмсем халăхри вăхăтра хăйсен талăкĕсене аталантарма пек, хăйсен талăкĕсене аталантарма пултăрăр».

Хресчен хĕрарăмĕ Эльза Мерке Демократиллĕ Германи Республикинчи хĕрарăмсен ирĕклĕ пурнăçĕ синчен каласа панă.

Китай делегацийĕ ячĕпе Ли Да-цюань сăмах туса калани. Ана делегатсем ăшшăн йышăнса илнĕ. Вăл конгресс делегачĕсене Китай халăх ячĕпе хĕрлĕ салам калани. Ли Да-цюань Китай халăхĕ туна чапăлă ситĕнĕсем синчен, Китай хĕрарăмĕсем ирĕке тухни синчен, вĕсем пурнăçĕсĕр арçынсемпе пĕр тан пулни синчен, государство хĕрарăмсемпе ачасемшĕн тăрăшни синчен каласа панă.

Греци представительницин Элли Алексиу Грецири хĕрарăмсен ĕнăлăх пурнăçĕ синчен каласа панă.

Ирхи зарура çавăн пекех тата Ямайка, Англи, Норвеги, Канада, Бразили, Люксембург, Швейцари представительницисем тухса калаçă.

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн ĕнерхи кăнтăрлăхи ларăвĕнче Совет Союзĕн представительницин Л. И. Кухаренко сăмах тухса калани. Вăл совет хĕрарăмĕсен пурнăçĕ синче тĕплĕн чарăнса тăнă. Ирĕке сĕршывра, — теме вăл, —хĕрарăмсен пурнăçĕ тĕнчери пурнăç сĕршывсенчи хĕрарăмсен пурнăçĕнчен тĕпрен уйăрса тăрать. Совет стройĕ хĕрарăмсене творчествăлă пынăн ĕçе хутшăмпа май пачĕ. Совет хĕрарăмĕсем экономика, политика, культура пурнăçĕнче арçынсемпе пĕр тан правăпа усă кураççĕ.

Пурте пăхăççĕ, Совет Союзĕ ытти чылай сĕршывсем пек мар, вăсласа «çĕкăлланас суя сине тăмарĕ. Вăл вăрçă хъсăнăх сăлтăмĕ пулнă. Çак ыйтăва пĕтĕмпе пăхса тухни Совет Союзĕн ĕçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Ăна çирĕплетме çĕршывăн